ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЧĂВАШ ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

173 (9852) № | 1956 çулхи августăн 24-мĕшĕ, эрнекун | Хакĕ 20 пус. 39-мĕш çул тухать.

Учительсен канашлăвĕсем умĕн

Çитес кунсенче районсемпе хуласенче учительсен канашлăвĕсем пулса иртеççĕ. Ку канашлусен пĕлтерĕшĕ пысăк: вĕсенче учительсем вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн питех те кирлĕ ыйтăвĕсене сӳтсе яваççĕ, ĕçри опытпа паллашаççĕ.

Партин XX съезчĕ шкулсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Пирĕн шкулсенче вĕрентĕве пурнăçпа тачă çыхăнтарса пымаççĕ. Вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакансем практикăлла ĕçе хутшăнма çителĕклĕ таран хатĕрленсе çитеймеççĕ. Çак çитменлĕхе пĕтермелли майсем çинчен, вĕренĕве общественнăй усăллă ĕçпе çыхăнтарса пырас тĕлĕшпе шкулсен мĕн-мĕн тумалли çинчен тĕплĕн сӳтсе явмалла та ĕнтĕ учительсен çитес канашлăвĕсенче.

Паллах, политехникăлла вĕренĕве йĕркелес тĕлĕшпе шкулсем ку таранччен пухнă опыта шута илмелле. Малта пыракан шкулсенче мастерскойсем, ĕç пӳлĕмĕсем, машиноведенипе электротехника кабинечĕсем тунă, вĕсем предприятисемпе, колхозсемпе, машина-трактор станцийĕсемпе тачă çыхăну тытаççĕ. Пуçламăш классенче алĕçне вĕрентме тытăнни, мастерскойсенче, сăнавлă участоксенче практикăлла ĕçсем ирттерни вĕсене малашнехи вăхăтра практикăлла ĕçе хутшăнма май парĕ. Красноармейски районĕнчи Карăкçырмари пуçламăш шкулти учитель Гурьянов, Çĕмĕрлери 3-мĕш вăтам шкулти учительница Макарова, Шупашкарти 1-мĕш вăтам шкулти учительница Семенова алĕç урокĕсене усăллă, лайăх ирттереççĕ.

Чылай шкулсенче халĕ мастерскойсем йĕркеленĕ. Вĕсем тĕрлĕ оборудованипе тата инвентарьпе пуянланса пыраççĕ. Ку ĕçре шкулсене вĕсен шефĕсем нумай пулăшаççĕ. Уйрăммăнах Шупашкарти, Çĕмĕрлери, Улатăрти предприятисем шкулсене нумай пулăшнă. Çĕмĕрле комбиначĕ, «Большевик» завод тата ыттисем те шкулсене мастерскойсем туса параççĕ. Хуçалăх организацийĕсем шкулсем валли вĕренӳре усă курма вунпар станок; тракторсемпе автомашинăсем тата моторсем уйăрса панă.

Политехникăлла вĕренĕве йĕркелес ĕçре халăхĕ пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Кăçал шкулсен материальнăй никĕсне çирĕплетес тĕлĕшпе уйрăммăнах нумай вăй хума тивет. Кашни вăтам тата çичĕ çул вĕренмелли шкулта мастерскойсемпе кабинетсем, географи площадкисем тумалла. Программăна пăхнă лабораторисем, практикăлла ĕçсене тата экскурсисене пурне те ирттермелле.

Ачасене политехникăлла пĕлӳсем парасси вĕсене ĕçе юратма вĕрентес ыйтупа тачă çыхăнса тăрать. Учительсен, ачасене политехникăлла пĕлӳ никĕсĕсемпе паллаштарнипе пĕрлех, вĕсене кирек мĕнле ĕçе те—йывăррине те, çăмăллине те — юратма вĕрентмелле.

Ачасене ĕçе вĕрентсе çитĕнтересси — коммунизмла воспитанире чи кирлĕ ĕç. Ку ĕç чи малтан çемьере пуçланать. Учительсен çемьепе, ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе тачăн çыхăну тытмалла, халăх хушшинче педагогикăлла пĕлӳсене сарас тĕлĕшпе хастарлăнрах ĕçлемелле.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче чылай шкулсен коллективĕсем вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатрĕç, анчах çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Канаш районĕнчи шкулсенче, сăмахран, иртнĕ вĕренӳ çулĕнче 5.028 вĕренекенрен 1.101 ача вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман пулнă. Уйрăмах Аслă Пикшикри тата Шаккăлти шкулсен коллективĕсем начар ĕçленĕ. Шаккăлти шкулта 394 вĕренекенрен 54 ача пĕр класран тепĕр класа куçайман, 105 ачана кĕркунне экзамен тытма хăварнă.

Республикăри нумай шкулсенче вырăс чĕлхипе математикăна начар вĕрентеççĕ. Çавăнпа çак предметсем тăрăх вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ уйрăмах пысăк. Ку çитменлĕхе хăвăртрах пĕтерни кирлĕ. Çавна май учительсен квалификацине тата ĕçри ăсталăхне ӳстерес ыйту та сивĕччĕн тухса тăрать.

Шкулсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл—воспитани ĕçĕ начар пулса пыни. Нумай учительсем çак ĕçе хакламаççĕ, вăл ĕçрен пăрăнаççĕ.

Ачасене воспитани парасси, вĕсене кирек ăçта та—çемьере те, шкулта та, урамра та хăйсене тирпейлĕ, йĕркеллĕ тытма, примерлă, дисциплинăллă пулма, юлташлăхра туслăха юратма воспитани парасси вĕрентӳ ĕçĕпе тачă çыхăнса тăрать. Вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ урокра пулса пырать. Урок—вĕренĕвĕн тĕп форми. Вăл усăллă, ăнăçлă иртесси пĕтĕмпех учителĕн пĕлĕвĕнчен, ăсталăхĕнчен килет.

Учительсен августри канашлăвĕсен задачи вĕрентӳ пахалăхне ӳстерессишĕн кĕрешме мĕнпур учительсене мобилизацилесси пулать. Канашлусем критикăпа самокритика анлăн сарăлнă никĕс çинче, ĕçлĕхлĕ иртмелле. Çутĕç органĕсен, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнчи çитменлĕхсене татăклăнах пĕтерсе пырас тесен, канашлусенче критикăласа каланисене, асăрхаттарнисене, паха сĕнӳсемпе канашсене пурне те шута илмелле. Секцисен ĕçĕнче кашни учитель хăйне интереслентерекен ыйтусем çине тивĕçлĕ ответ илме пултартăр. Канашлу малта пыракан учительсен опычĕпе педагогика ĕçĕнчи мĕнпур паха меслетсене сармалли трибуна пулса тăтăр. Канашлăва докладчиксен те, учительсен хăйсен те тĕплĕн хатĕрленмелле, парти райкомĕсен, райисполкомсен, учительсен канашлăвне лайăх, активлăн ирттерме пулăшмалла. Комсомол райкомĕсемпе профсоюз организацийĕсен те çак ĕçĕн тулашĕнче тăрса юлмалла мар.

Канашлусенче учительсен политехникăлла пĕлĕвĕсене хăпартас ыйтусене уйрăммăнах çивĕччĕн лартмалла. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче политехникăлла пĕлӳсем паракан предметсене вĕрентекен учительсен методикăлла комиссийĕсем халиччехинчен нумай лайăхрах ĕçлемелле. Математика, физика, хими, биологи тата черчени вĕрентекен учительсемпе уйрăм семинарсем ирттерни пысăк усă пама пултарать. Çак ĕçре Учительсен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен институтăн тата районсенчи педагогика кабинечĕсен хăйсен пуçарулăхне кăтартмалла. Вăтам шкулсенчи лайăх йĕркеленĕ мастерскойсем, вĕренекенсем валли кăна мар, учительсемшĕн те политехникăлла пĕлӳсем илмелли паха вырăн пулса тăмалла.

Партин XX съезчĕ халăха вĕрентес енĕпе историлле пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Улттăмĕш пилĕкçуллăхра пурне те вăтам пĕлӳ парас ĕçе, пĕтĕмĕшпе илсен, пурнăçламалла. Культура строительствин çак пысăк задачине пурнăçлас тĕлĕшпе çитес вĕренӳ çулĕнче пирĕн пысăк ĕçсем туса ирттермелле. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче пирĕн нумай шкулсем пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентес тĕлĕшпе йышăннă закона çителĕклĕ таран пурнăçлаймарĕç. Республикăра иртнĕ вĕренӳ çулĕнче тăватă пин ача шкул тулашне тăрса юлнă. Çакăн пек пысăк çитменлĕхсемпе текех килĕшсе тăма çук. Всеобуч законĕ—çирĕп закон, ăна кашни хулара, кашни районта, кашни ялтах çирĕп пурнăçласа пыни кирлĕ.

КПСС XX съезчĕ совет шкулĕ умне лартнă пысăк задачăсене ăнăçлă пурнăçласси—учительсен, çутĕç органĕсен, партипе совет органĕсен чыслă тивĕçĕ. Çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçре шкулсене пур майсемпе те пулăшса пыни кирлĕ. Шкулсемшĕн, çамрăксене лайăх вĕрентсе çитĕнтерессишĕн тăрăшасси—пĕтĕм совет общественноçĕн пархатарлă ĕçĕ.

Колхозниксемпе механизаторсем! Кунĕн-çĕрĕн тырă вырар. Мĕнпур комбайнсемпе, виндроуэрсемпе, косилкăсемпе, жнейкăсемпе усă курар. Уй-хирти тырпула пухса кĕртес ĕçе паян-ыранах вĕçлер!

Колхозниксен хастарлă ĕçĕ

Пирĕн колхоз членĕсем кăçал тăрăшса ĕçленипе начар мар тырпул туса илчĕç. Малтанлăха шутланă тăрăх, кăçал кашни гектартан ыраш 11—12 центнер, сурхи тулă вунă центнер ытларах тухать.

Ăнса пулнă тырпула пухса кĕртме колхозниксем тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕç. 255 гектар çинчи кĕрхи тырăсене эпир ултă кун хушшинче, 40 гектар пăрçана икĕ кунта тата 316 гектар сурхи тырăсене 10—12 кун хушшинче пуçтарса кĕртрĕмĕр. Çапла вара пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене августăн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех пуçтарса кĕртрĕмĕр.

Тырă вырма тухсан малтанхи кунсенчех авăн çапассине йĕркелерĕмĕр. Кĕлтесене куллен 50—60 лашапа турттарни «МК-1100» молотилкăна тухăçлă ĕçлеме май парать. Н. Дмитриев машиновед куллен 12 тонна тырă çапас вырăнне 18—19 тонна çапать. Çак кунсенче татах лашапа ĕçлемелли икĕ молотилкăна ĕçе ятăмăр. Халĕ мĕнпур кĕлтесене капана хывса çитернĕ хыççăн колхозниксен ытларахăш пайне авăн çапнă çĕре куçартăмăр.

Иртнĕ çулсенче пирĕн колхоз государствăна тырă парас ĕçе вăраха янă. Кăçал çак çитменлĕхе пĕтертĕмĕр. Ятарласа организациленĕ транспорт бригади (бригадирĕ шофер В. Еремеев юлташ) кашни кун Канашри хатĕрлев пунктне 2—3 хут кайса тăчĕ. Кунта уйрăмах грузчиксем Л. Матвеев, С. Евграфов, Н. Тимофеев вăйа шеллемесĕр ĕçленине палăртмалла. Вĕсем тăрăшса ĕçленипе пула колхоз государствăна обязательнăй йĕркепе тата натуроплата шучĕпе тырă памалли плана августăн 20-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ.

Кĕрхи тырăсем акас ĕçе те кăçал вăхăтра тытăнтăмăр. Трактор сеялкипе ĕçлекенсем М. Алексеевпа В. Никонов трактористсем кашни сехетре туллин усă курса ĕçлерĕç. Тырра пĕтĕмпех ретлĕ майпа августăн 21-мĕшĕ тĕлне акса пĕтертĕмĕр. Çитес кунсенчех трактористсем кĕрхи çĕртме тума тытăнаççĕ.

Уй-хир ĕçĕсем йĕркеллĕ пулса пыни ĕçе тума тĕплĕн хатĕрленнинчен тата ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса унпа туллин усă курнинчен килет. Кăçал эпир ĕçшĕн тӳлес йĕркене улăштартăмăр. Çапла, тырă вырма тухсан малтанхи виçĕ кунĕнче колхозник кашни кун 0,18 гектар тырă вырнă пулсан ăна ĕçшĕн тепĕр пай хушса тӳлемелле турăмăр. Çакă колхозниксен ĕçри хастарлăхне ӳстерсе пычĕ. Чылай колхозниксем нормăна ирттерсе тултарса ĕçлерĕç.

Кăçалхи çул колхоз 51 гектар кукуруза акнă. Çав шутран 17 гектар çинчи кукурузăна выльăхсене симĕсле çулса çитертĕмĕр. Ытти 34 гектарне силос тума хăвартăмăр. Вăл питех те-парка çитĕнчĕ, кашни гектартан 500 тоннăна яхăн симĕс масса тухать. Халĕ ăна колхозниксем алăпа вырса-çуласа силос хываççĕ. Кашни ĕне валли вунă тоннăран кая мар кукуруза силосĕ хатĕрлетпĕр.

Кукуруза пысăк усă панине пирĕн колхозниксем лайăх ăнланса илчĕç. Кукуруза массине çитернĕ чухне ĕнесем пĕрре сурă хут сĕт хушрĕç. Иртнĕ хуçалăх çулĕнче кашни ĕнерен вăтам шутпа 938 килограмм сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал ку таранччен 1.200 килограмм ытла суса илтĕмĕр.

Кăçал пирĕн колхозниксем, партин XX съезчĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешсе, артель хуçалăхне малалла аталантарас, тырпулпа выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе паллă улшăну турĕç. Çакă вăл улттăмĕш пилĕкçуллăхри задачăсене чыслăн пурнăçлама май пуррине уççăн çирĕплетсе парать.

В. НИКИТИН.
Шăхасан районĕнчи «Заря» колхоз председателĕ.

КПСС райкомĕсемпе райисполкомсем тăратнă тăрăх, тĕштырă культурисем пухса кĕртнĕ, государствăна тырă памалли плана тултарнă тата хăйсен валли кĕрхи тырă вăрлăхĕ хывса çитернĕ çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ

КАЛИНИНО РАЙОНĔ ТĂРĂХ

26. **Маленков ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **С. А. Ястребов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Н. В. Владимиров** юлташ).

МУРКАШ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

27. **Сталин ячĕпе тăракан** колхоз (колхоз председателĕ **Е. А. Андреев** юлташ, парторганизаци секретарĕ **З. М. Мамаев** юлташ).
28. **«Красный Октябрь» колхоз** (колхоз председателĕ **А. Ф. Федоров** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Н. Г. Петровский** юлташ).
29. **«Сталинец» колхоз** (колхоз председателĕ **В. И. Мартынов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Н. В. Васильев** юлташ).
30. **Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **К. И. Белов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **В. Г. Григорьев** юлташ).
31. **«Динамо» колхоз** (колхоз председателĕ **Т. С. Сильвестров** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Н. Л. Волков** юлташ).

Тырăшăн пыракан кĕрешӳре

Шупашкар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, механизаторсем, КПСС XX съезчĕ ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе лартнă задачăсене пурнăçласа пырса, пирвайхи ӳсĕмсем турĕç. Нумай колхозсенче, сăмахран, Молотов ячĕпе, Маленков ячĕпе, Фрунзе ячĕпе тăракан, «Красный флот», «Победа» тата ытти колхозсенче, кăçал кашни гектартан 18—20-шер центнер ыраш, 14—15-шер центнер сурхисем пухса кĕртеççĕ.

Районти парторганизаци ăнса пулнă тырпула хăвăрт, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме мĕнпур колхозниксене мобилизацилерĕ. Тырă вырма тухиччен ăмăртакан колхозсем, уй-хир бригадисем тата трактор бригадисем пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслерĕç. Тĕрĕслӳ итогĕсене партин уçă пухăвĕсенче, правлени ларăвĕсенче, колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче пăхса тухрĕç. Çав пухусенчех ĕç планĕсене, Ставрополь крайĕнчи ялхуçалăх работникĕсен чĕнĕвне сӳтсе явнă, коммунистсемпе комсомолецсене, агитаторсене, пĕтĕм актива производствăн ответлă участокĕсем çумне çирĕплетнĕ. Вырма тухнă малтанхи кунсенчех тырпула хăвăрт пухса кĕртессишĕн, чи пирвайхи тивĕçе—государствăна тырă памалли задание пурнăçлассишĕн социализмла ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Ялти коммунистсем, районти партипе совет активĕ тырра кĕске срокра вырса пухма мĕнпур вăя мобилизацилерĕç. Районти колхозсем, механизаторсен пулăшăвĕпе усă курса, 6—7 кун хушшинче ыраш вырса пĕтерчĕç. Уй-хир ĕçĕсем уйрăмах «Победа», Щербаков ячĕпе тăракан, «Правда», «Серп и молот», «Гвардеец» тата ытти хăшпĕр колхозсенче йĕркеллĕ пулса пыраççĕ.

«Победа» колхоз августăн 13-мĕшĕнче государствăна тырă памалли плана тултарчĕ. Тырă пухса кĕртес, авăн çапас ĕçсенче çитĕнӳсем тунăшăн, государствăна срокчен тырă парса татнăшăн, вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлесе хунăшăн колхоза КПСС райкомĕпе райисполкомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Артель членĕсем хĕрлĕ ялава илнĕ ятпа пухăннă митингра августăн 25-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерме, кукурузăран силос хывас ĕçе вĕçлеме, выльăх-чĕрлĕх валли ăшă витесем хатĕрлесе çитерме сăмах пачĕç.

МТС механизаторĕсем колхозсене пысăк пулăшу параççĕ. Чи лайăх комбайнерсем Тихонов, Ядринцев, Григорьев, Якимов юлташсем 250—300-шер гектар çинчи тырпула вырса тĕшĕлерĕç. Тырă вырнă вăхăтрах авăн çапассине лайăх йĕркелени паха. МТС машинисчĕсем Плотникова, Федоров, Александров, Яковлев юлташсем кашни сменăра 20 тонна ытла тырă çапса илеççĕ.

Авăн çапас ĕçе лайăх йĕркелени государствăна тырă памалли плана срокчен тултарма май парать. Государствăна тырă леçнĕ çĕрте колхоз автомашинисен водителĕсемпе транспорт бригадин бригадирĕсем хастар ĕçленине палăртмасăр иртме çук. Ленин ячĕпе тăракан колхозри шофер-коммунист Николаев юлташ кĕске вăхăт хушшинче 900 центнер тырă турттарчĕ. «Победа» колхозри Михайлов, Буденный ячĕпе тăракан колхозри Зайцев юлташсем автомашинăсемпе кунĕн-çĕрĕн, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, колхозсене тырă памалли задание срокчен пурнăçлама пулăшрĕç. «Победа», Буденный ячĕпе тăракан, «1-ое мая» колхозсенчи транспорт бригадисем (бригадирĕсем Мамутин, Михеев, Ломоносов юлташсем) виçĕ эрне хушшинче 700—800-шер центнер тырă леçсе, плана ирттерсе тултарнă. Районти парторганизаци государствăна тырă памалли плана августăн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма тĕллев лартрĕ. Ялти коммунистсем, партипе совет активĕ, мĕнпур колхозниксем çак задачăна чыслăн пурнăçлас тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Калас пулать, пирĕн ĕçре çитменлĕхсемпе чăрмавсем те сахал мар тĕл пулаççĕ. Хăшпĕр пуçламăш парторганизацисемпе правленисем йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма, ĕçри çитменлĕхсемпе чăрмавсене пĕтерме тăрăшмаççĕ. МТС дирекцийĕпе парторганизаци машинăсемпе лайăхрах усă курассишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Вĕсем 17 молотилкăран 6-шне халĕ те ĕçе яраймаççĕ. Хăшпĕр комбайнерсен ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕк. 6-мĕш, 11-мĕш, 12-мĕш бригадăсенчи комбайнерсем пĕтĕмпе 35—45-шер гектар кăна тырă вырнă.

Парти райкомĕ кашни пуçламăш парторганизаци умне çакăн пек требовани лартрĕ: коммунистсем колхоз производствин чи ответлă участокĕсенче пулччăр. Районти парторганизаци кăçалхи ялхуçалăх çулне лайăх вĕçлеме, улттăмĕш пилĕкçуллăхăн пĕррĕмĕш çулĕнче ялхуçалăх продукчĕсем туса илмелли заданисене ăнăçлă пурнăçлама мĕнпур вăя мобилизацилет.

А. ВОРОНОВ.
КПСС Шупашкар райкомĕн секретарĕ.

Çирĕп сăмах

ЧУРАЧĂК. Шуркасси ял Советĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз ĕçченĕсемпе МТС-ăн 7-мĕш бригадинчи механизаторсем тырпула кĕске срокра пухса кĕртессишĕн, государствăна тырă памалли плана срокчен тултарассишĕн пыракан социализмла ăмăртăва хутшăнса, конкретлă обязательствăсем йышăннă. Ĕç планĕ тăрăх кĕрхи тырăсене пĕр эрне, сурхи тырăсене 10 кун хушшинче пухса кĕртме палăртнă.

Артель ĕçченĕсен ĕçри хастарлăхĕ тырпул пухса кĕртме тухнă хыççăн кашни кун вăйланса пынă.

Колхозниксем хăйсен сăмахне çирĕп тытаççĕ. Кĕрхи тата сурхи тырăсене вĕсем районта пуринчен малтан, тирпейлĕ пухса кĕртрĕç. Государствăна тырă памалли плана августăн 13-мĕшĕ тĕлне ирттерсе тултарнă.

Халĕ колхозра авăн çапас ĕç вăйланса пырать. Уй-хир бригадисенче тăватă молотилка кунĕн-çĕрĕн чарăнмасăр ĕçлеççĕ. Колхозниксене сменăпа ĕçлеттересси йĕркеленĕ май ĕç тухăçлăхĕ икĕ хут ӳснĕ. Витнĕ итемсем çинче авăн çапас ĕç йĕпе сапа çанталăкра та чарăнмасть.

Молотилкăсене механизмсен вăйĕпе ĕçлеттереççĕ. Нумаях пулмасть А. Кузьмин юлташ ертсе пыракан иккĕмĕш уй-хир бригадинчи молотилкăна мотор вăйĕпе ĕçлеттермелле тунă. Унччен çак машинăна лашасен вăйĕпе ĕçлеттернĕ.

Колхоз ĕçченĕсем авăн çапас ĕçе сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме палăртнă. Вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçласа пыраççĕ: кĕлте кӳрсе пĕтернĕ, тĕштырăсен 70 процентне çапса тĕшĕленĕ.

Механизаторсемпе колхозниксен пĕр пайĕ кĕрхи тырăсем акать. 252 гектар çинчи кĕрхи тырăсене пĕтĕмпе тенĕ пекех хĕреслĕ тата ансăр ретлĕ майпа акмалла. Кашни гектар пуçне 40-шер тонна çĕрĕ тислĕк кăларнă.

Çак кунсенче уй-хир бригадисем кукуруза çулса силос хывма тытăнчĕç. Кукуруза питех те вăйлă çитĕннĕ. Симĕс масса кашни гектартан 600 центнертан кая мар тухать. Кăçал колхозниксем кукурузăран пурĕ 900 тонна силос хываççĕ. Малтанхи икĕ кун хушшинче 325 тонна силос хывнă.

Колхозри строительсем выльăх-чĕрлĕх витисене хĕле хатĕрлеме тытăнчĕç.

КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Сталин ячĕпе тăракан колхоз ĕçченĕсем мĕн уй-хире тухнăранпах хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

(Хамăр корр.).

Аванс шучĕпе—2,5 килограмм тырă

ЧКАЛОВСКИ. «Красное знамя» колхоз членĕсем кăçал вăйлă тырпул ӳстерчĕç. Вĕсем ăнса пулнă тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн вăйхала шеллемесĕр тăрăшса ĕçлеççĕ. Пысăк лаптăк çинчи кĕрхи тырăсене пухса кĕртнĕ ĕнтĕ, халĕ колхозра кĕлтесене капана хывас, авăн çапас ĕçсем хĕрӳллĕн пулса пыраççĕ.

Тырпул пухса кĕртес, авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсене кăтартуллă туса пынăшăн «Красное знамя» колхоза Чкаловски райисполкомĕпе КПСС райкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

Колхоз хăйĕн пĕррĕмĕш тивĕçне чыслăн пурнăçларĕ: государствăна тырă памалли плана срокчен тултарчĕ. Колхоз государствăна закуп шучĕпе тырă сутма тытăнчĕ.

Халĕ колхозра ĕçкунĕсем тăрăх тырă валеçсе пама хатĕрленеççĕ. Аванс шучĕпе кашни ĕçкунĕ пуçне 2,5-шер килограмм тырă валеçме палăртнă.

И. МАРКОВ.

Румыни Халăх Республикин Аслă Наци Пухăвĕн Председательне

ПЕТРУ ГРОЗА юлташа

Румыни Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕн Председательне

КИВУ СТОЙКА юлташа

Румынири Рабочисен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пĕрремĕш секретарьне

Г. ГЕОРГИУ-ДЕЖ юлташа

Румыни фашизм пусмăрĕнчен ирĕке тухнăранпа 12 çул тултарнă ятпа СССР Верховнăй Совет Президиумĕ, СССР Министрĕсен Совечĕ тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ Сире тата Сирĕн урлă пĕтĕм Румыни халăхне сывлăх суна саламлаççĕ, социализм çулĕпе малалла кайма тата чечекленсе вăйланма ырă сунаççĕ.

Румынири ĕççыннисем, социализмла аталану çулĕ çине çирĕп тăрса, социализм çĕнтерĕвĕшĕн, хăйсен пурнăçне лайăхлатассишĕн тата культурăна ӳстерессишĕн, мир ĕçĕн çĕнтерĕвĕшĕн ăнăçлă кĕрешеççĕ.

Румыни халăхĕ 12 çул хушши пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе тунă чаплă çитĕнӳсемшĕн совет халăхĕ чĕререн савăнать.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ, СССР Министрĕсен Совечĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕ Румынири рабочисен партине, ĕçе юратакан талантлă Румыни халăхне тата Румыни Халăх Республикин правительствине социализмшăн, Совет Союзĕпе Румыни хушшинчи туслăха малалла вăйлатассишĕн, социализмлă çĕршывсен туслăхне çирĕплетессишĕн тата пĕтĕм тĕнчери мире тĕреклетессишĕн пыракан кĕрешӳре çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырă сунаççĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.
СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Н. БУЛГАНИН.
КПСС Центральнăй Комитечĕн Пĕрремĕш Секретарĕ Н. ХРУЩЕВ.

Мускав, 1956 çулхи августăн 22-мĕшĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Советски районĕнчи «Герой» колхозра «МКС-1100» молотилкăпа авăн çапаççĕ. Çаврăшкара машиновед Михаил Александров.
П. Ярдаев фотоӳкерчĕкĕ.

Львов—Волынь çĕр кăмрăк бассейнĕн шахтисене тăвакансен канашлăвĕ

ЧЕРВОНОГРАД (Львов облаçĕ), августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Пали КПСС Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Н. С. Хрущев юлташпа Украинăри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ А. И. Кириченко юлташ Волынь облаçĕнчен Львов облаçĕнчи районсене пырса çитнĕ. Çак районсенче халĕ çĕнĕ çĕр кăмрăк бассейнĕн шахтисене, хушма предприятийĕсене тата горнякесен поселокĕсене тăваççĕ.

Н. С. Хрущевпа А. И. Кириченко юлташсем унта халĕ тăвакан 1-мĕш номерлĕ «Великомостовская» шахтин площадкинче пулнă. Унта вĕсем проходчиксемпе, монтажниксемпе, строительсемпе, инженерсемпе тата техниксемпе тĕл пулса калаçнă, шахтăсем чавас ĕç мĕнле пынипе тата çĕр çинчи сооруженисемпе паллашнă.

Хрущев юлташ «Укрзападшахтострой» комбинат руководителĕсене шахтăсем тумалли çĕнĕ техникăпа тата технологипе çителĕксĕр усă курни çинчен асăрхаттарса каланă, проектсене суйласа илнĕ чухне вĕсем экономикăшăн лайăхрах пулмаллине пур майсемпе те шута илме кирлине кăтартса панă.

1-мĕш номерлĕ шахта территорийĕнчен Н. С. Хрущевпа А. И. Кириченко юлташсем сборнăй тимĕрбетон конструкцисем туса кăларакан комбинат строительствине пынă. Унта усă площадкăра тимĕрбетон туса хатĕрлекен завод лартаççĕ. Ун тĕлĕнче строительсем çăмăл çивитти тата стенасем тума йышăннă. Çакă вăл тавăкĕнех ĕçлеме, сборнăй тимĕрбетон туса кăларассине икĕ хут ÿстерме май парать. Н. С. Хрущев юлташ çак пуçарăва ырласа каланă.

Червоноградра «Укрзападшахтострой» комбинатри производствăра малта пыракансен, инженерсемпе техниксен, проект организацийĕсен представителĕсен, вырăнти партипе хуçалăх активĕн канашлăвĕ пулса иртнĕ.

Канашлу ĕçне КПСС Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ, Украинăри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ А. И. Кириченко юлташ, СССР Çĕр кăмрăк промышленность министрĕ А. Н. Задемидко юлташ, СССР Çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсен строительствин министрĕ Л. Г. Мельников юлташ, Украина ССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ П. А. Розенко юлташ, Украина ССР Çĕр кăмрăк промышленность министрĕ А. Ф. Засядько юлташ, Украина ССР Çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсен строительствин министрĕ Г. В. Красниковский юлташ, партин Львов обкомĕн секретарĕ М. К. Лазуренко юлташ тата партин Волынь обкомĕн секретарĕ И. С. Грушецкий юлташ хутшăннă.

Канашлура пулнисем промышленность строительствине пурăнмалли çуртсем тăвас ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе явнă, строительство хăвăртлăхне ÿстерес, ĕçĕн индустриллĕ меслечĕсемпе усă курас тĕлĕшпе паха сĕнÿсем чылай панă, çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсем тăвакан министерствăсене критиклесе каланă.

Канашлура халĕ тăвакан предприятисен директорĕ Н. З. Игуменцев юлташ, «Укрособугольмонтаж» трестăн Львоври строительствăпа монтаж управленийĕн начальникĕ В. П. Кутасевич юлташ, 1-мĕш номерлĕ «Червоноградская» шахтăра ĕçлекен проходчик В. С. Блашковский юлташ тата ыттисем тухса каланă.

Канашлура КПСС Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ тухса каланă.

Червоноградра шкул умĕнчи площадьре хулари ĕçсыннисем, Львов облаçĕнчи Сокаль, Великие Мосты тата Забуги районĕсенчи колхозниксем нумай пин çын пухăннă.

Унта Н. С. Хрущев юлташ сăмах тухса каланă. Ăна халăх ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Вăл шахта тăвакансене тата колхоз уй-хирĕсен ĕçченĕсене хĕрÿллĕн саламланă, ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума ырă суннă.

Хулара шахтерсен ачисем валли çĕнĕ вăтам шкул лартнă. Ачасен ячĕпе Н. С. Хрущев юлташа Лина Краминская пионерка тав тунă, ăна чечексем панă.

Украинăри авалхи йăлапа Сокаль районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Ф. И. Свистун юлташ Н. С. Хрущев юлташа çăкăр-тăварпа кĕтсе илнĕ, колхозниксен ячĕпе çапла шантарса каланă: уй-хир ĕçченĕсем, çĕнĕ çĕр кăмрăк бассейнĕнчи горняксемпе тачă çыхăнса, улттăмĕш пилĕкçуллăхăн аслă планĕсене срокчен пурнăçласшăн вăй-хала шеллемесĕр тăрăшса кĕрешĕç.

* * *

Львов облаçĕнче пулнă вăхăтра Н. С. Хрущевпа А. И. Кириченко юлташсем Сокаль районĕнчи Скоморохи ялĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоза пырса курнă. Ялхуçалăх артелĕн председателĕ Социализмла Ĕç Геройĕ У. Д. Баштык хăйсен нумай енлĕ хуçалăхĕ мĕнле аталанса пыни çинчен, артель членĕсем КПСС XX съесчĕн историлле решенийĕсене пурнăçласшăн мĕнле кĕрешни çинчен каласа панă.

Н. С. Хрущевпа А. И. Кириченко юлташсем çавăн пекех Нестеровски районĕнчи Добросин ялĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхозра пулнă. 1949 çулта çак ялта Хрущев юлташ хресченсем колхоз тăвас тĕлĕшпе ирттернĕ организацилле пухăва хутшăннă. Добросинри ялхуçалăх артелĕн председателĕ И. Н. Цюпка колхозăн хуçалăх тĕлĕшĕнчи ĕçĕсем çинчен каласа панă. Колхоз картишĕнче Хрущев юлташпа колхозниксем хушшинче туслă калаçу пулса иртнĕ.

Тухăçлă кукуруза

Ялтан тухсан инçех мар, айăмлă вырăнта кукуруза уйĕ сарăлса выртать. Инçетрен пĕр тикĕс вăрман евĕр сип-симĕс курăнать çак уй. Ÿсентăрансен çÿллĕшĕ виçĕ метра яхăн.

— Ку — пирĕн пуянлăх, — савăнса калаççĕ «Красная Армия» колхоз ĕçченĕсем, кукуруза уйĕ еннелле кăтартса.

Чăннипех мухтанмалла. Çĕр гектар çинче акнă кукуруза питĕ вăйлă çитĕнет.

Çак кунсенче кукурузăна çулса силос хывма пуçларĕç. Анлă уйра трактор сасси кĕрлет. Вăл кукуруза выракан комбайна туртса пырать. Кун пек машина районта пĕрре кăна. Пĕлтĕр ăна кĕркунне çеç илсе килнĕ. Халĕ унпа комбайнер Сильвестр Алексеев ĕçлет.

Норма тăрăх куллен комбайнпа 7 гектар кукуруза вырмалла, малтанхи кунĕнчех 10 гектар вырнă. Комбайн вырать çеç мар, силос хывма кукуруза тунипе суасине вĕтетсе пырать. Çав массăна машина çине тÿрех бункертан пушатаççĕ те турттарса кайса силос шăтăкне хываççĕ. Комбайн лайăх ĕçленĕ май кукурузăна виçĕ автомашинăпа та турттарса кайма ĕлкĕреймеççĕ. Колхоз шоферĕсем И. Желудкин, В. Павлов, В. Кузьмин канма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Кукурузăран силос хывнă çĕрте 14—15 çын ĕçлет. Вĕсем 250 тонна силос хывреç те ĕнтĕ. Çитес кунсенчех колхозра тата 500 тонна силос хываççĕ, ăна валли сооруженисем çителĕклĕ.

Уйрăм участоксем çинче кукуруза пуçне пухса илмелле. Раиса Елкина, Гаиса Степанова тата Анастасия Алексеева юлташсем ертсе пыракан звеносен участокĕсенче кукуруза пуçĕсем тухнă ĕнтĕ, вĕсем шуралса, пиçсе пыраççĕ.

— Кукурузăн симĕс масси çеç мар, пуçĕ те пулать, ун пирки нимĕн те иккĕленместпĕр,—каласа парать колхоз председателĕ А. Высоцкий юлташ.—Кăçал эпир икĕ пин тоннăран кая мар кукуруза силосĕ хыватпăр. Кашни ĕне пуçне пирĕн вунă тонна силос пулать.

Халĕ выракан кукуруза массине виçсе пăхнă хыççăн вăл кашни гектартан 540 центнер тухни паларнă.

Колхоз ĕçченĕсем выльăхсем валли ытти апатсем те нумай хатĕрлеççĕ. 280 гектар çинчен улăх утипе акса тунă курăксем çулса пуçтарса капансене хывнă, 60 лав ытла вăрмантан çулçă касса турттарнă. Пилĕк гектар çинчи выльăх кăшманĕ те, çĕрулми те кăçал нихçанхинчен те тухăçлă пулаççĕ.

Колхоз иртнĕ хуçалăх çулĕнче вăтам шутпа кашни ĕнерен 1.500 килограмм сĕт суса илнĕ. Кăçал унтан та ытларах—1.800 килограмм суса илме май пур. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илесси кунта çулсерен ÿссе пырать. Çакăн пек ÿсĕм тума артель ĕçченĕсене кукуруза пысăк пулăшу парĕ.

Х. ЛИСИН.
(Хамăр корр.).

Канаш районĕ.

Колхозри çĕнĕ çуртсем

ВĂРМАР. «Свобода» колхозра строительство ĕçĕ çултан-çул вăйланса пырать. Кăçал кăна кунта чултан купаласа 300 тонна вырнаçмалăх виçĕ овощехранилище турĕç, çавăн пекех пăру, чăх-чĕп витисем, склад, гараж, силос траншейи тунă. Типовой проектпа тунă клуб çумне шлакпа бетонран кинобудка туса лартнă, вăл тăватă пÿлĕмрен тăрать. Клуба шал енчен шуратнă, чÿрече янаххисене шурă сăрпа сăрланă.

Çак ĕçсене Л. Петров коммунист ертсе пыракан строительство бригади турĕ. Вăл хĕлĕн-çăвĕн пĕр чарăнмасăр ĕçлет. Бригадăра опытлă платниксем нумай. Сăмахран, К. Уливанов, В. Матвеев колхозниксем пур ĕçе те паха тăваççĕ.

М. ИВАНОВ.

Кино кăтартас ĕçе çакăн пек ертсе пымалла-и?

«Красное Сормово» колхоз темиçе ялтан тăрать. Вĕсенче клубсем е кино кăтартмалли пунктсем пур. Ямапакри клуб пĕчĕккех мар. Унти зала 200 çынна яхăн вырнаçать. Хăлле кунта кино йĕркеллех кăтартнă. Çăва тухсан вара ял ĕçченĕсен кăмăлĕ хуçăлнă: клубра кино кăтартма пăрахнă. Сăлтавĕ—киноаппарат лартма камера тумани.

— Пирĕн клубра камера çук,— терĕ клуб заведующийĕ В. Михайлова юлташ.— Колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци те, ял Совечĕ те çак çитменлĕхе хăвăртрах пĕтерме тăрăшмаççĕ.

Колхоз руководителĕсем, правительство йышăннă постановление пăсса, механиксене камерăсăр клубрах кино кăтартма ирĕк панă. Июль уйăхĕнче А. Андреев киномеханик кунта икĕ сеанс кино кăтартнă. Çак клубрах А. Алексеев механик кино кăтартнă вăхăтра пĕррехинче лента тивсе кайма пуçланă.

Сирĕклĕри клубра та кино кăтартмалли камерăпа двигатель лартмалли будка çук. Çавна пула халĕ кунта та кино кăтартма чарнă.

Кино кăтартмалли камерăсем тăвасси çинчен сăмах хускатсан, Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Киселев юлташ çапла калать:

— Халĕ пирĕн унтан кирлĕрех ĕçсем нумай,—тет.

Çак руководитель «халĕ ерçÿ çук, ал çитмест» тесе каласшăн ĕнтĕ. Анчах вăл уйра хĕрÿ ĕçсем пуçланиччен мĕн туна-ши? Кинокамерăсемпе будкăсем тума хĕллех хушнă вĕт. Кинокамера тума вăхăт та, ĕç вăйĕ те, укçа та нумаях кирлĕ мар, тăрăшни кăна кирлĕ. Çитменнине колхозăн культура фондĕнчи укçа та усă курмасăр выртать. Кĕрекаçри кино кăтартмалли пунктра самообложени укçипе камера тума палăртнă. Çакă та пурнăçланмасть.

Сăмах майĕн колхозри кино кăтартмалли пунктсем хĕле хатĕр марри çинчен те асăнса хăвармалла. Янмурзино клубĕнчи залра, тĕслĕхрен, кăмака юсавлă мар. Çавна пулах иртнĕ хĕлле библиотека вырнаçнă тăвăр пÿлĕмрех кино кăтартнă. Колхоз руководителĕсем çакăнтан халĕ те вывод тăвасшăн мар.

Кино кăтартмалли камерăсемпе двигатель лартмалли будкăсем тăвас ĕçе хакламан руководительсем Красноармейски районĕнче маларах асăннă икĕ колхозра кăна мар. Кино кăтартмалли 52 пунктран пĕринче те камерăсемпе будкăсем туман. Çак сăлтавпах халăха кино кăтартас ĕç уйăхран уйăхах начарланса пырать. Çичĕ уйăхри плана киносеанссем енĕпе 81 процент, халăха кино курма хутшăнтарас енĕпе—88 процент, укçа пухас енĕпе 68 процент кăна пурнăçланă. Июнь уйăхĕнче ĕçсем пушшех начарланнă, кино кăтартмалли плана 20 процент таран çеç тултарнă. Ялхуçалăх фильмĕсем кăтартас ĕç уйрăмах япăх пулса пырать. Культура пайĕ ялхуçалăх фильмĕсем кăтартма колхозсемпе договорсем те туса пĕтермен-ха.

Халăха кино кăтартас ĕç начарланса çитни çинчен район руководителĕсем пĕлмеççĕ тесе çук. Вĕсем ку ыйтупа решени хыççăн решени туртса кăларса кăтартнă пулĕччĕç. Акă райсовет исполкомĕн кăçалхи апрелĕн 27-мĕшĕнчи решенийĕ. Унта июнĕн 1-мĕшĕччен ялсенче кино кăтартмалли камерăсемпе электродвигатель лартмалли будкăсем туса çитерме хушнă, малашне камерăсăр пунктсенче кино кăтартма чарнă. Решенире камерăсемпе будкăсем тумалли укçана ăçтан илмеллипе те палăртнă.

Çак решени мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăма районти культура пайĕн заведующине М. Прохоров юлташа хушнă. Вăхăчĕ иртсе кайнă, анчах решени пурнăçа кĕмен: кăтартнă вăхăт тĕлне нихăш пунктра та камерăсемпе будкăсем туман.

Июнĕн 9-мĕшĕнче райисполком каллех кино кăтартас ĕç мĕнле пулса пыни çинчен сÿтсе явнă, кинокамерăсемпе будкăсем туса пĕтермелли срока тепĕр уйăха тăснă.

Райисполкомăн ку постановленийĕ те пурнăçланман. Çакăн хыççăн районта кино кăтартас ĕç мĕнле пулса пыни çинчен КПСС райкомĕн бюровĕнче пăхса тухрĕç. Райисполком йышăннă решенисенчи пекех, ку хутĕнче те халăха кино кăтартасси чăтма çук начарланнине палăртрĕç, ялсенче кинокамерăсемпе будкăсем туса пĕтермелли срока сентябрĕн 1-мĕшне хăварчĕç. Палăртнă вăхăт çывхарса килет, анчах пĕр колхозра та кино кăтартмалли камерăсемпе будкăсем тума пуçăнман.

Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем камерăсемпе будкăсем тума сăмах параççĕ, теприсем тÿрех: «тăваймастпăр»,—тесе калаççĕ. Культура пайĕнче ĕçлекенсем ялсем тăрăх пустуй çÿресе вăхăта ирттереççĕ, ĕçта мĕн тумаллине чухлаймаççĕ. Райкомпа райисполкомра вара вĕсене вăхăтра пулăшма «май тупаймаççĕ», ларусем ирттернипех лăпланаççĕ.

Организаторла ĕçсем тумасан, парти райкомĕ йышăннă решени те пурнăçланмасăр тăрса юлма пултарать.

П. ВИКТОРОВ.
Н. ОРЛОВ.

Ÿкерчĕк çинче: Чапаевски поселокри (Шупашкар хули) кĕнеке магазинĕнче.
Ф. Иванов фотоÿкерчĕкĕ.

Вăхăт нумай юлмарĕ пулин те...

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланиччен шутлă кунсем юлчĕç. Чылай шкулсем ачасене кĕтсе илме лайăх хатĕрленчĕç. Шăхасанти вăтам тата Шĕкĕрти çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче, сăмахран, партăсене доскасене тата наглядлăй пособисене юсанă е çĕнĕрен тунă, кирлĕ чухлĕ учебниксемпе тетрадьсем хатĕрленĕ. Çак шкулсенче политехникăлла вĕренĕве тĕрĕс йĕркелеме нумай ĕçсем тунă. Шăхасанти вăтам шкулăн токарнăй тата сверлильнăй становсем, трактор, комбайн пур. Вĕсене шкула МТС панă. Çак шкулах районти культура пайĕ автомашина панă.

Çапах та çакна калас пулать: районти хăшпĕр шкулсем вĕренÿ çулне ăнăçлă пуçлама хатĕр мар-ха. Атнашри çичĕ çул вĕренмелли шкул (директорĕ Грачев юлташ) тăватă çурта вырнаçнă, чылайăшне темиçе çул каяллах юсамалла пулнă. Çитменнине виçĕ çуртăн тăррине улăшма витнĕ. Вĕсене тахçанах урăх материалсемпе улăштарса витме май пулнă. Çук, паян кун та вĕсем çав-çавах. Чăн та, темиçе уйăх каялла виçĕ класлă çурт тума тытăннă. Анчах ăна хăçан туса пĕтересси паллă мар.

— Кăçал пулмасть, йывăç материалсене турттарса килеймерĕмĕр,—каласа парать шкул хуçалăхĕн заведующийĕ Г. Евлампьев юлташ.

Шкул çуртне тăвакан платниксем халĕ урăх ĕçе куçнă—шкул валлиех мунча тата вÿхреп тăваççĕ. Тĕлĕнмелле, темшĕн малтанах мунча тумалла ĕнтĕ?! Çав вăхăтрах ял варринчи шкулта вутă хумалли сарай тума йывăç çук тесе лараççĕ.

Наглядлăй пособисем те çитмеççĕ, политехникăлла вĕренĕве йĕркелеме мастерской пÿлĕмне те йĕркене кĕртмен. Чăннипе илсен, шкул дирекцийĕ пилĕк верстак хатĕрленисĕр пуçне урăх нимĕн те туман. Партăсене сăрламан. Хĕл каçма шкула 98 кубометр вутă кирлĕ, ку таранччен 30 кубометр çеç турттарса килнĕ, учительсем валли вутă нимĕн чухлĕ те илсе килмен.

Ямашри вăтам шкулта та классене юсаса çитермен. Халлĕхе пĕр корпусăн пÿлĕмĕсене икĕ çын шуратаççĕ. Пĕр класăн чÿрече рами çук. Партăсене сăрлама тытăнман. Политехникăлла вĕренĕве йĕркелĕ туса пыма условисем çук. Вутă çитмест.

Матьшури çичĕ çул вĕренмелли шкулта çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсем тунă: кăмакасемпе партăсене, доскасене юсаса сăрланă, кирлĕ чухлех учебниксемпе тетрадьсем хатĕрленĕ. Анчах чи кирлине тăваймаи—шкул çивиттине юсаман, шыв апать, учительсем валли вутă турттарса килмен, шкул валли те кирлĕ виçерен çуррине çеç илсе килнĕ.

Çак фактсем районти çутĕç пайĕ çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçе çителĕксĕр ертсе пынине кăтартса параççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ шкулсене юсама панă мĕнпур укçа-тенкĕпе усă курман. Çитес вĕренÿ çулĕнче шкулсене 4.400 кубометр вутă кирлĕ пулсан, 1.800 кубометр çеç хатĕрленĕ. Уйрăм шкулсенче вара ик-виçĕ уйăх пурăнмалăх та вутă çук.

В. ЯКОВЛЕВ.
В. ЧЕРНОВ.

Сезонри плана тултарнă

Сезон пуçламăшĕнче Атăл леш енчи торф предприятийĕн коллективĕ халăх хуçалăхне топливо планран ирттерсе хатĕрлесе пама социализмла обязательство йышăннăччĕ. Панă сăмаха тысçă пурнăçласшăн рабочисем, инженерсемпе техниксем вăя шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Бригадăсем хушшинчи ăмăртура уйрăмах Г. Стекольщиков юлташ ертсе пыракан бригада паха тĕслĕх кăтартнă. Вăл 5.441 тонна вырăнне 6.581 тонна ытла торф кăларнă, дирекципе торфкомăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне икĕ хут илме тивĕçлĕ пулнă. В. Семенов, В. Большаков юлташсем ертсе пыракан бригадăсем те сезонри задание чылай ирттерсе пурнăçланă. 17 бригадăран 16-шĕ хăйсен заданийĕсене ăнăçлă пурнăçланă, 17-мĕш бригада та паян-ыран плана тултарать.

Пĕтĕм коллектив тăрăшса ĕçленипе предприяти сезонри планран ирттерсе 3 пин тонна яхăн торф кăларнă.

Юлашки икĕ уйăх хушшинче сумăр час-часах çуса тăчĕ, торф кăларса типĕтме йывăр пулчĕ. Ăна пула вĕтĕ торф кăларма май килмен, çавăнпа предприяти коллективĕ мулкашкалă торф ытларах кăларма тăрăшнă. Халĕ пур участоксенче те кăларнă торфа пĕтĕмпех ăнăçлă типĕтсе купаласшăн хĕрÿллĕ ĕç пырать.

Учительсен семинарĕ

Шупашкар районĕнчи педагогика кабинечĕ пуçарнипе учительсен семинарĕ пулса иртрĕ. Семинарта пуçламăш классенче вĕрентекен учительсем юрă тата рисовани урокĕсене ирттерес ыйтусем тăрăх докладсемпе лекцисем итлерĕç, чăваш тата вырăс халăх юррисене пуçламăш классенче мĕнле юрлаттармаллине тишкерсе тухрĕç тата вĕренчĕç. Шупашкарти музыка училищин преподавателĕ В. Орлов музыка теорийĕпе паллаштарчĕ.

Вăл ертсе пынипех учительсем концерт пачĕç.

Хула малашлăхĕ

Канаш—чугун çулăн пысăк узелĕ пулса тăчĕ. Вăрçăччен Канашпа Шупашкар хушшинчи чугун çула туса пĕтерсе ĕçе ячĕç. Çавăн хыççăн Канаш станцийĕн халăх хуçалăхĕнчи пĕлтерĕшĕ тата ытларах ÿсрĕ. Акă, Шупашкар гидроэлектростанцине тума тытăнсан, Канаш урлă куллен темиçешер поездпа груз килсе тăрĕ. Груз турттарасси ÿсес пынă май çитес çулсенче чугун çул узелне пысăклатма тата çĕнĕ техникăпа пуянлатма палăртнă. Тĕслĕхрен, иккĕмĕш станцинчен хĕвелтухăç енче çĕнĕ лини хывмалла, вăл лини вара Канашпа Красноуфимск хушшинчи çулпа Алешево разъезчĕ патĕнче пĕрлешмелле. Станцире пурĕ 15 километр тăршшĕне яхăн çĕнĕ линисем хывмалла. Çакă вăл 1-мĕш станцирен поездсене хăвăрт йышăнса ăсатма май парать.

Улттăмĕш пилĕкçуллăхра Хусан чугун çулĕ çинче тепловозсем çÿреме тытăнаççĕ. Çавăнпа Канашра тепловозсене топливо парса тăмалли пункт уçаççĕ. Чугун çул урлă автомашинăсемпе каçса каймалли çул тума тытăнаççĕ. Çĕнĕ вокзал патĕнчен Лесной переулока çурран каçма кĕпер тума палăртнă.

Станцире стрелкăсемпе сигналсене электричество вăйĕпе ĕçлемелле тăваççĕ. Халĕ маневр тăвакан паравуссем çинче радио ĕçлет. Кăçалтан пуçласа вагон списокĕсемпе поезд составителĕсем радиопа çыхăнса калаçма пуçлаççĕ. Радиопа усă курни ĕçе хăвăртлатма, поездсен çÿрессине йĕркелесе ÿстерме май парать.

Çĕнĕ вокзал патĕнче колхоз пасарĕ пулать. Чугун çул ОРС-ĕн сачĕнче больница тăваççĕ, унтах поликлиника тата ача çуратмалли уйрăмсем пулаççĕ.

Хулара пурăнакан ĕçсыннисен хисепĕнчен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ чугун çул работникĕсем: вагон юсакансем, машинистсем, путеецсем, движенецсем, çыхăну работникĕсем шутланаççĕ.

Чугун çул узелĕ аталанса пынипе пĕрлех, хулари промышленность та вăйланать. Вагонсем юсакан заводра производство калăпăшĕ çулсерен ÿсет. Çак пилĕкçуллăхра заводри чылай цехсене урăхлатса çĕнетеççĕ, цехсене радиофикацилеççĕ. Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин ялхуçалăх машинисене юсакан заводĕ çывăх вăхăтра çĕнĕ техникăпа пуянланать, унăн цехĕсене пысăклатаççĕ. Иртнĕ çулта кунта çĕнĕ литейнăй цеха ĕçе янă. Улттăмĕш пилĕкçуллăхра груз турттармалли автомашинăсене, пăспа ĕçлекен электростанцисене юсакан цех тăваççĕ. Заводри рабочисемпе служащисен хисепĕ, вăтам шутпа, пин çынран иртмелле. Вĕсен культурăпа пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем тумалла. Пурăнмалли çуртсем çĕнĕрен тăвасси сарăлать. Çитес çывăх вăхăтрах 12 хваттерлĕ икĕ çурт тума палăртнă. Асăннă ĕçсене тума 13,6 миллион тенкĕ укçа уйăрса параççĕ.

Иртнĕ пилĕкçуллăхра хулари промкомбинатран тимĕр-тăмăр шăратакан тата сварочнăй завод тунă. Кунта çĕнĕрен шăратакан цех тăваççĕ тата цехсенче ансăр чугун çулсем хываççĕ. Вĕсене туса пĕтерсен тимĕр-тăмăр шăратасси улттă хут ÿсмелле. 1957 çулта заводри рабочисемпе служащисем валли 12 хваттерлĕ çурт тума тытăнаççĕ.

Хулара кондитер фабрики тăвас ĕç пырать. Пĕтĕмĕшпе ĕçе ярсан, çак фабрика талăкра 5 тонна продукци туса кăларма пултарать. Кăçалхи апрель уйăхĕнче бисквит цехĕ ĕçе кĕчĕ, халĕ канфет цехĕнче монтаж ĕçĕсем пыраççĕ. Нумаях та вăхăт иртмĕ, республикăри ĕçсыннисем Канашри кондитер фабрики туса кăларнă канфетсемпе печенисене тутанма пуçлĕç.

Çăкăр заводĕ, сĕтĕçу бази, аш-какай комбиначĕ, çĕлĕ фабрики, «Дружба», «Швейник», Ленин ячĕпе тăракан, «1 Май» тата ытти артельсем хăйсен пĕтĕм хăвачĕпе ĕçлеççĕ. Çак предприятисем пурте аталанса пымалла. «Дружба» артель кирпĕч производствине механизацилесе çитерет, çавăн хыççăн кунта кирпĕч туса кăларасси 3—4 хут ÿсет. «Швейник» тата «1 Май» артельсем те ĕçра çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн мĕнпур майсемпе кĕрешеççĕ. Вĕсем продукци туса кăларассине икĕ хут ÿстерме палăртнă.

Улттăмĕш пилĕкçуллăхра хулара çĕнĕ промышленность предприятийĕсем лартаççĕ. Тĕслĕхрен, «Дружба» артель кроватьсем тăвакан завод лартать. Вăл çулталăк хушшинче никельпе илемлетнĕ 50 пин кровать тумалла. Çавнашкалах урапа-çуна заводĕ тăвас ĕç пырать. Çитес вăхăтра консерв заводĕ, çăкăр пĕçерекен икĕ завод, тимĕрпе бетон изделийĕсем хатĕрлекен, шлак блокĕ тăвакан заводсем тата механизациленĕ çĕнĕ арман тума тытăнаççĕ.

Канашран кашни кун груз турттаракан автомашинăсем, автобуссем Шупашкара, Сĕрпуне, Шăхасана, Комсомольскине, Патăрьеле, Тăвая, Вăрмара тата ытти çĕре те çÿреççĕ. Автотранспорт кантурĕн паркĕнче автомашинăсен хисепĕ ÿсе пырать. Çитес çул хальхи кинотеатр çурчĕпе юнашар икĕ хутлă автовокзал çурчĕ тума палăртнă. Унăн çывăхĕнчех виçĕ хутлă çĕнĕ гостиница çурчĕ пулать.

Хулара парк, чугун çул работникĕсен тата вагонсем юсакан заводăн клубĕсем, стадион, кинотеатр ĕçлеççĕ. Анчах вĕсем ĕçсыннисен ыйтăвĕсене халлĕхе тивĕçтереймеççĕ-ха. Çавна шута илсе, чугун çул работникĕсем валли 530 çын вырнаçмалăх культура çурчĕ тăваççĕ. Унта эстрадăпа физкультура залĕсем, кану пÿлĕмĕсем тата вуламалли зал пулать. Ленин урамĕнче кăçал çĕнĕ кинотеатр çуртне тума тытăнĕç. Çитес вăхăтра хула паркне лайăхлатса илемлетме, унăн территорийĕнче çуллахи театр çуртне тума палăртнă. Çавăн пекех хулара икĕ стадион тума пăхнă.

Йăла учрежденийĕсен хисепĕ çулсерен ÿсет. Хулара çĕнĕ çĕлемелли тата ытти мастерскойсем çĕнĕрен чылай уçма палăртнă. Вагонсем юсакан заводра кăçал çĕнĕ мунча ĕçлеме пуçларĕ. Хулари мунчана юсаса лайăхлатаççĕ, унăн çумĕнче механизациленĕ прачечнăй тăваççĕ.

Суту-илÿ ĕçĕ малалла аталанса пымалла. Улттăмĕш пилĕкçуллăхра тавар çаврăнăшĕ тата хулари столовăйĕсемпе чайнăйсенчи лармалли вырăнсен хисепĕ 50-шар процент ÿсеççĕ. Нумай хутлă çуртсен аялти хучĕсенче çĕнĕ ларексемпе магазинсем тата столовăйсем уçмалла. Кăçал хулара продавецсăр тавар сутмалли магазин ĕçлеме пуçларĕ. Кĕçех хулара пысăк магазин уçăлать. Хальхи вăхăтра икĕ хутлă çĕнĕ столовăй тăваççĕ. Суту-илÿ работникĕсен тивĕçĕ суту-илÿ ĕçне пĕрмай лайăхлатса пырасси, ĕçсыннисен сĕнĕвĕсене туллин тивĕçтересси пулать.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче Канашра пĕр пуçламăш шкулпа педагогика училищи çеç ĕçленĕ. Ун хыççăнхи çулсенче кунта вĕренÿ заведенийĕсен хисепĕ çултан-çул ÿсе пычĕ. Халĕ Канашра 6 вăтам тата пĕр пуçламăш шкул пур. Кунсăр пуçне хулара ялхуçалăх механизацийĕн училищи, медицина училищи, финанс техникумĕ, педагогика училищи, каçхи чугун çул техникумĕ тата çамрăк рабочисен вăтам шкулĕсем икĕ ĕçлеççĕ. Кăçал хулара çĕнĕрен пĕр пуçламăш тата икĕ вăтам шкул уçмалла. Пионерсен çурчĕ уçăлчĕ.

Хулара шкул çулне çитмен ачасене воспитани парассине лайăхлатса пыраççĕ. 1956 çулта çĕнĕрен ача ясли тата ача сачĕ уçăлнă, çитес кунсенче вагонсем юсакан заводра тепĕр ясли уçăлать. Çитес çулта 100 ача валли çĕнĕрен ача сачĕн çуртне тума тытăнаççĕ.

Улттăмĕш пилĕкçуллăхра пурăнмалли çуртсем тăвасси чылай ÿсет. Иртнĕ пилĕкçуллăхра хулара пурăнмалли çуртсем 20 пин тăваткал метр тунă пулсан, кăçал кăна 10 пин тăваткал метр чухлĕ çуртсем туса пĕтермелле. Пилĕкçуллăхра чугун çулĕн уйрăмĕ 10 пин тăваткал метр чухлĕ çуртсем тăвать. Кăçал Пушкин урамĕнче 24 хваттерлĕ çурт тăваççĕ. Ытти урамсенче те чылай çуртсене кăçал туса пĕтереççĕ. Çĕнĕ пилĕкçуллăх вĕçлениччен хулари урамсене юсаса лайăхлатмалла, вĕсенче йывăçсем нумай лартмалла. Хулара асфальт сарнă çулсемпе тротуарсем пулаççĕ.

Шыв парса тăрасси, канализаци ĕçĕсем кашни çулах лайăхланса пымалла.

Хулари промышленноçпа транспорт предприятийĕсем кÿршĕллĕ районсенчи колхозсемпе МТС-сене ялхуçалăх ĕçĕсенче пысăк пулăшу параççĕ. Хальхи вăхăтра вагонсем юсакан заводран 10 колхоз электроэнерги илсе тăрать. Çак заводри тата строительствăпа монтаж кантурĕнчи рабочисен вăйĕпе хула çывăхĕнчи икĕ колхозра теплицăсем тунă. Чылай колхозсем водопроводсем, кормоцехсем, силос башнисем тăвас енĕпе хуларан пысăк пулăшу илеççĕ. Хулари предприятисемпе учрежденисем Канаш районĕнчи колхозсене шефа илнĕ.

Хула ÿссе, аталанса пынă май, кадрсем те çĕнĕ çитĕнÿсем тума, хăйсен ĕçри ăсталăхне лайăхлатса пыма тăрăшаççĕ. Халĕ хулара врачсемпе техниксем, инженерсемпе экономистсем, электриксемпе машинистсем тата ытти специалистсем нумайăн ĕçлеççĕ.

Çултан-çул ÿсет, çĕнелет Канаш хули—социализмла çĕнĕ хула. Унăн малашлăхĕ тата та чаплăрах пулать.

А. АЛЕКСЕЕВ.
Канаш хула Совет исполкомĕн коммунальнăй хуçалăх пайĕн заведующийĕ.

Донбаса, Çурçĕре...

КАЛИНИНО. ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене Донбаса ĕçлеме кайма чĕнсе калани çине ответлесе, районти çамрăксем заявленисем параççĕ.

— Мана Донбаса ĕçлеме яма ыйтатăп. Малтанхи йывăрлăхсем мана хăратмаççĕ, шахтер пулса çĕршыва ытларах усă курĕп,—тесе çырать хăйĕн заявленийĕнче «Авангард» колхозри комсомолец А. Алеферов.

Çавăн пекех ку колхозран Алексей Ефремов, Алексей Чернов, Иван Якимов çамрăксем шахтăра ĕçлеме яма ыйтса заявленисем панă.

ВЛКСМ райкомне çирĕм çамрăкран ытла заявленисем пынă.

Çурçĕрти стройкăсене те нумай çамрăксем ĕçлеме кайма кăмăл тăваççĕ. 13 çамрăк Печора чугун çулне тума тухса кайнă. Кĕçех унта ĕçлеме тепĕр çирĕм çын тухса каять. Вĕсем хушшинче Калининари ача çуртĕнче ÿснĕ Виталий Ремизов, Николай Никитин, Геннадий Викторов, Вениамин Арсентьев т. ыт. те.

В. ВИКТОРОВ.

☆

Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхозри доярка А. П. Чигитова юлташ. Вăл 1955 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1956 çулхи августăн 1-мĕшне çитиччен кашни ĕнерен 3.311 килограмм сĕт суса илнĕ.

Г. Зиньков фотоӳкерчĕкĕ.

☆

Малта пыракан дояркăсем

1955 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1956 çулхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне сĕт суса илнĕ

Дояркăсен ячĕсем	Колхозсем е совхозсем	Район	Кашни ĕнерен сĕт суса илнĕ (килогрампа)
1. О. М. Митрофанова	Чăвашсен опытлă ялхуçалăх станцийĕ	Çĕрпӳ	3871
2. А. Е. Ефимова	Чăвашсен опытлă ялхуçалăх станцийĕ	Çĕрпӳ	3556
3. Н. И. Нараткина	Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз	Вăрнар	3397
4. А. Ф. Федорова	Чăвашсен опытлă ялхуçалăх станцийĕ	Çĕрпӳ	3366
5. А. С. Оленина	Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз	Вăрнар	3352
6. А. М. Першуткина	Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз	Вăрнар	3340
7. А. П. Чигитова	Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз	Вăрнар	3311
8. З. В. Васильева	Чăвашсен опытлă ялхуçалăх станцийĕ	Çĕрпӳ	3298
9. Е. В. Руссова	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	3240
10. Н. Л. Леонтьева	Чăвашсен опытлă ялхуçалăх станцийĕ	Çĕрпӳ	3219
11. А. Ф. Ванифатьева	Чăвашсен опытлă ялхуçалăх станцийĕ	Çĕрпӳ	3175
12. С. Л. Волкова	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	3126
13. А. Г. Григорьева	Чăвашсен опытлă ялхуçалăх станцийĕ	Çĕрпӳ	3119
14. М. Г. Григорьева	Чăвашсен опытлă ялхуçалăх станцийĕ	Çĕрпӳ	3071
15. Ю. М. Ягудина	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	3034
16. Н. И. Кузовенкова	«Победа» колхоз	Улатăр	3001
17. Р. И. Куликова	«Победа» колхоз	Улатăр	2938
18. Р. П. Кузнецова	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2906
19. А. Р. Родионова	Чăвашсен опытлă ялхуçалăх станцийĕ	Çĕрпӳ	2895
20. В. И. Измина	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2843
21. А. П. Назарова	«Победа» колхоз	Улатăр	2842
22. М. П. Спиридонова	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2827
23. Е. А. Перепелкина	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2812
24. Л. И. Иванова	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2803
25. Л. А. Шахеева	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2794
26. Н. М. Воробьева	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2793
27. А. А. Арсентьева	«Росглаввино» совхоз	Шупашкар хули	2484
28. З. А. Костикова	«Комбинат» колхоз	Сĕмĕрле	2775
29. Н. Г. Титова	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2774
30. Р. Л. Манькова	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2762
31. А. И. Зайцева	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2748
32. П. М. Моргина	Буденнăй ячĕпе тăракан колхоз	Етĕрне	2736
33. М. Л. Федюкова	«Комбинат» колхоз	Сĕмĕрле	2734
34. М. Ф. Плешкова	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2733
35. Т. Е. Исаева	«Победа» колхоз	Улатăр	2724
36. В. Н. Сугутская	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2722
37. Л. П. Астраханцева	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2660
38. З. П. Данилина	«Победа» колхоз	Улатăр	2655
39. Н. М. Воробьева	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2638
40. Е. Анатольева	Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	Çĕрпӳ	2617
41. Р. Кузьмина	Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	Çĕрпӳ	2610
42. М. А. Мезейкина	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2602
43. В. Я. Ганюшкина	«Победа» колхоз	Улатăр	2593
44. З. А. Андреева	Буденнăй ячĕпе тăракан колхоз	Етĕрне	2587
45. С. А. Долгова	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2574
46. З. П. Шахеева	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2574
47. Л. Г. Балалаева	«Победа» колхоз	Улатăр	2550
48. Ф. И. Портнова	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2509
49. Т. В. Емельянова	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2497
50. А. В. Белкова	Чăваш государство лаша вити	Етĕрне	2467
51. М. Петрова	Сталин ячĕпе тăракан колхоз	Çĕрпӳ	2457
52. Е. Г. Блашенкова	«Путь Ильича» колхоз	Улатăр	2447
53. В. Карсакова	«Красная звезда» колхоз	Комсомольски	2443
54. М. С. Сергеева	Жданов ячĕпе тăракан колхоз	Вăрнар	2438
55. В. П. Петрова	«Росглаввино» совхоз	Шупашкар хули	2430
56. А. В. Михайлова	Буденнăй ячĕпе тăракан колхоз	Етĕрне	2419
57. О. Ф. Селиванова	Свердлов ячĕпе тăракан колхоз	Сĕмĕрле	2418
58. Л. Ефимова	Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	Çĕрпӳ	2410
59. А. А. Александрова	Чăваш государство лаша вити	Етĕрне	2397
60. М. Ильина	«Красная звезда» колхоз	Комсомольски	2391
61. Р. Г. Саликова	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2377
62. Р. П. Христофорова	Буденнăй ячĕпе тăракан колхоз	Етĕрне	2345
63. Е. А. Иудина	«Дружба» колхоз	Комсомольски	2338
64. Е. Антонова	Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	Çĕрпӳ	2336
65. М. И. Лёкина	«Красный луч» колхоз	Улатăр	2331
66. М. И. Иванова	Буденнăй ячĕпе тăракан колхоз	Етĕрне	2320
67. М. И. Кузнецова	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2320
68. В. К. Лапотникова	«Красный луч» колхоз	Улатăр	2317
69. Е. Н. Лисина	Сталин ячĕпе тăракан колхоз	Чкаловски	2306
70. Р. С. Крысина	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2305
71. Л. И. Дергунова	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2295
72. Л. Ф. Балакина	«Путь Ильича» колхоз	Улатăр	2288
73. Л. Ильина	Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	Çĕрпӳ	2280
74. Т. П. Сатарова	«Гвардеец» колхоз	Чкаловски	2276
75. Р. Васильева	«Красная звезда» колхоз	Комсомольски	2265
76. М. Ф. Чермакова	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2252
77. К. Н. Николаева	Жданов ячĕпе тăракан колхоз	Вăрнар	2248
78. П. Н. Тютькина	«Путь Ильича» колхоз	Улатăр	2241
79. А. В. Мазярова	«Комбинат» колхоз	Сĕмĕрле	2214
80. К. М. Молчанова	Буденнăй ячĕпе тăракан колхоз	Етĕрне	2213
81. Н. Петрова	«Красная звезда» колхоз	Комсомольски	2212
82. Л. В. Храмова	«Путь Ильича» колхоз	Улатăр	2212
83. С. М. Бакина	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Елчĕк	2203
84. И. Е. Атласкина	«Красный Октябрь» колхоз	Муркаш	2174
85. Г. Борисова	«Новая жизнь» колхоз	Çĕрпӳ	2149
86. М. Г. Вилова	Киров ячĕпе тăракан колхоз	Кувакино	2136
87. З. М. Чугунова	«Победа Октября» колхоз	Улатăр	2135
88. З. И. Спрыгина	«Победа Октября» колхоз	Улатăр	2130
89. П. А. Ванюкова	«Комбинат» колхоз	Сĕмĕрле	2127
90. Р. И. Ежова	«Путь Ильича» колхоз	Улатăр	2107
91. Н. Блинова	«Новая жизнь» колхоз	Çĕрпӳ	2104
92. У. М. Анисимова	Маленков ячĕпе тăракан колхоз	Етĕрне	2087
93. Т. Ильина	«Новая жизнь» колхоз	Çĕрпӳ	2084
94. А. Ферапонтова	«Новая жизнь» колхоз	Çĕрпӳ	2082
95. Н. Арсентьева	«Красная звезда» колхоз	Комсомольски	2074
96. Л. А. Спрыгина	«Победа Октября» колхоз	Улатăр	2074
97. Г. А. Шишканова	«Первомайский» колхоз	Улатăр	2071
98. В. И. Илларионова	Киров ячĕпе тăракан колхоз	Йĕпреç	2064
99. А. И. Шугаева	«Комбинат» колхоз	Сĕмĕрле	2064
100. Ф. Ф. Майорова	«Комбинат» колхоз	Сĕмĕрле	2060

Техникăлла контроль продукци пахалăхне лайăхлатма пулăшать

Продукци пахалăхне лайăхлатасси, стандартсене тата технологи дисциплинине пурнăçласа пырасси предприятисенчи техникăлла пайсем ăнăçлă ĕçленинчен нумай килет. Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи техникăлла контроль пайĕнче пурĕ 200 çын ытла ĕçлет. Кашни цехра техникăлла контроль бюровĕ пур.

Стандартлă продукци туса кăларма паха чĕртавар тата çурма фабрикатсем кирлĕ. Çавна шута илсе, контролерсем завода кӳрсе килекен мĕнпур материалсен пахалăхне тĕрĕслеççĕ. Хăшпĕр чухне паха чĕртавартанах юрăхсăр продукци е детальсем туса кăлараççĕ. Çакă вăл станок, пресс е инструмент юсавлă мар пирки е çирĕплетнĕ технологи процесне пăснă пирки пулать. Тепĕр чухне рабочи техникăна лайăх пĕлменни те чăрмантарать. Çавăн пек кăлтăксене пĕтерес тĕлĕшпе кашни контролер хăй ĕçлекен цехри оборудовани тата ĕç хатĕрĕсем юсавлине, технологи дисциплинине пурнăçланине тăтăшах тĕрĕслет, çитменлĕхсем тĕл пулсан вара çийĕнчех пĕтерме тăрăшать. Унсăр пуçне контролерсем детальсен пахалăхне тата уйрăм операцисене мĕнле тунине тимлĕн сăнаса тăраççĕ, хатĕр продукцие тĕплĕн тишкерсе йышăнаççĕ, кам брак тунине, потребительсем пирĕн продукцие хурланине шута илеççĕ, мĕн пирки брак пулнине тĕпчесе пĕлеççĕ, малашне çак çитменлĕх ан пултăр [illegible] тивĕçлĕ ĕçсем тăваççĕ.

Завод дирекцийĕпе парторганизаци продукци пахалăхне лайăхлатасси çине тимлĕ пăхаççĕ, мĕншĕн тесен пĕр пĕчĕк кăлтăк пулсан та, технологи дисциплинине цĕртак çеç пăссан та, электроаппаратсене тĕрĕс усă курма май килмест. Çавăнпа конструкторсем, технологсем, рабочисем пурте хăйсен тивĕçне чыслă пурнăçлама, пĕр-пĕрне юлташла пулăшма, пĕр-пĕрин ĕçне тишкерме тăрăшаççĕ. Пирĕн заводра мастерсем уйрăмах пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсен ролĕне ӳстерес тата ĕç укçи ытларах тӳлеме тытăннă хыççăн мастерта ĕçлеме техникăна лайăх пĕлекен çынсене уйăрса лартнă. Вĕсенчен нумайăшĕ техникумран вĕренсе тухнă е халĕ вĕренеççĕ, производствăра пысăк опыт туяннă. Вĕсем стандартсемпе техникăлла условисене аван пĕлеççĕ, рабочисене кирек хăçан та пулăшу пама пултараççĕ. Çавăнпа эпир продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн мастерсен ответлăхне ӳстерме тăрăшатпăр. Контролерсем мастерсемпе тачăн çыхăнса ĕçлеççĕ, продукци пахалăхне лайăхлатас, технологи дисциплинине пурнăçлас тĕлĕшпе вĕсене куллен пулăшаççĕ.

Заводра сдельщина йĕркипе ĕçлекен рабочисене нарядсем параççĕ. Нарядра палăртнă ĕçе пурнăçласан, контролер детальсен тата тунă ĕçĕн пахалăхне тĕрĕслет те наряд çине алă тата пичет пусать. Унсăрăн рабочисене ĕç укçи тӳлемеççĕ. Урăхла каласан, контролерсем государство укçи-тенкине расходлама бухгалтерие ирĕк параççĕ. Çавăнпа контролерсем ăнлануллă, государство интересĕсене тимлĕ хӳтĕлекенсем пулма тивĕçлĕ.

Нумай контролерсем заводри партипе совет общественноçĕпе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ. Вĕсем продукци пахалăхĕшĕн, заводăн ырă ячĕшĕн кирлĕ пек кĕрешмен работниксене рабочисен пĕрлехи пухăвĕсенче, производствăлла канашлусенче е стена хаçачĕсем урлă тăрă шыв çине кăлараççĕ, производство культурине ӳстермелли майсене палăртаççĕ, çĕнĕ пуçарусене рационализаторла сĕнӳсене пурнăçлама чăрмантаракансене критиклеççĕ.

Чылай контролерсем агитатор, стена хаçат редколлегийĕсен членĕсем е редактор пулса ĕçлеççĕ. Вăл шелленесĕр тăрăшса ĕçлекен контролерсене цехсенче çеç мар, пĕтĕм заводра хисеплеççĕ. Тĕслĕхрен, крепежнăй цехра Климентьев, механически цехра—Чиркова, штамповочнăй цехра — Пушкарева Григорьев, изоляци цехĕсенче Сычева тата Потапова контролерсене пурте ырă кăмăлпа асăнаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем куллен цехсене продукци пахалăхне лайăхлатма тата çитменлĕхсене пĕтерме пулăшаççĕ. Пĕрремĕшпе тăваттăмĕш сборочнăй цехсенче рабочисемпе мастерсем Федорова тата Петрова контролерсене брак е мĕнле те пулин урăх кăлтăк пуласран сыхланма асăрхаттарнăшăн хисеплеççĕ.

Виççĕмĕшпе иккĕмĕш сборочнăй цехсенчи контролерсем Семенова, Ковалишек, Егоров тата Щепелева юлташсем аппаратсене тĕплĕн тĕрĕслеççĕ тата йĕркелеççĕ, çитменлĕхсем çинчен рабочисене ăнлантарса параççĕ.

Пĕтĕм коллектив тăрăшса ĕçленипе пула заводра брак çултан-çул чакать, продукци пахалăхĕ ӳсет. Завод брак тунипе пула 1950 çулта 735 пин тенкĕ, 1955 çулта—477 пин тенкĕ, кăçалхи çур çулта—205 пин тенкĕ убыток панă. Кунта çакна асра тытмалла: 1950 çултанпа завод продукци туса кăларассине нумай ӳстернĕ. Çапăшь брак пĕтĕмĕшпе чакнипе пĕрлех унăн удельнăй виçи те 1,3 процентран 0,47 процент таран пĕчĕкленнĕ. Çапах та çур çулта 205 пин тенкĕ убыток туни вăл—пирĕн завод ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх. Уншăн пуринчен ытларах техникăлла контроль пайĕн коллективĕ ответлă. Хăшпĕр контролерсем технологи дисциплинине пăснине, стандартсемпе инструкцисене пурнăçламаннине хирĕç хăюллăн кĕрешмеççĕ, рабочисем ĕçленĕ вырăнта сахал пулаççĕ, çитменлĕхсем пуласран сыхланма пулăшмаççĕ. Уйрăм контролерсем стандартлă мар детальсем тăвакансен кăмăлне пăсасшăн мар е станоксемпе инструментсем юсавлă маррипе килĕшсе тăраççĕ. Техникăна тĕплĕн вĕренсе çитеймен е хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстерме тăрăшман контролерсем те пур-ха. Эпир çавăн пек çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшатпăр.

Чылай контролерсем производствăра ĕçленĕ вăхăтрах заочно е каçхи техникумра вĕренеççĕ. Иккĕмĕш сборочнăй цехри Захаров, пĕрремĕш сборочнăй цехри Рыбаков, инструментсем тăвакан цехри Андреев юлташсем политехникăлла институтра заочно вĕренеççĕ. Егоров, Пиоштковский, Луконнова, Чиркова юлташсем тата ытти чылай контролерсем электромеханически техникумăн каçхи уйрăмĕнче вĕренеççĕ.

Наукăпа техника хăвăрт аталанать. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви производство процесĕсене анлăн автоматизацилес, уйрăм агрегатсемпе ĕçсене кăна автоматизацилениччен пĕтĕм цехри, заводри ĕçсене автоматизацилесси патне куçас задача лартрĕç. Ăна пурнăçлама халăх хуçалăхне çĕнĕрен те çĕнĕ тата кăткăс электроаппаратсем нумай кирлĕ. Çакна асра тытса, пирĕн завод коллективĕ продукци ытларах та ытларах туса кăларма, аппаратсен пахалăхне лайăхлатма тăрăшать.

В. ГОРДЕЕВ.

АЧА САЧĔ

Канашри «Дружба» промартель çак кунсенче ача сачĕ туса лартнă.

Ӳкерчĕк çинче: воспитательница М. Н. Петрова кĕçĕн ушкăнри ачасемпе вăйă иртерет.

С. Гущин фотоӳкерчĕкĕ.

Кашни колхозра паха çуртсем тăвар

Редакцие килнĕ çырусем тăрăх

Ялхуçалăх ĕçченĕсем, КПСС XX съезчĕн решенийĕсене пурнăçласа пырса, вăйлă тырпулшăн, тухăçлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн кĕрешеççĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн республикăри уйхирсенче кăçалхи тырпула кĕске срокра, хăвăрт пухса кĕртме тăрăшаççĕ. Кунпа пĕрлех колхозсенче общественлă çуртсем—выльăх витисем, хранилищĕсем тăвасси вăйлăн сарăлнă. Çакна пирĕн редакцие килекен çырусенчен те лайăх курма пулать.

Шăхасан районĕнчи **Х. Гордеев** ялкор çапла çырса пĕлтерет:

Максим Горький ячĕпе тăракан колхозра ялхи строительство бригади организациленĕ. Бригадăна колхозри парторганизаци секретарĕ Н. Григорьев юлташ ертсе пырать. Кăçал строительсем 130 сурăх вырнаçмалăх, 1.000 чăх-чĕп хупмалăх витесем, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем валли икĕ общежити туса лартнă. Хĕле кĕриччен пăру вити тума палăртнă.

Çыру авторĕ малалла бригада членĕсен ĕçри хастарлăхĕ пысăк пулни çинчен çырать. М. Володкин, А. Васильев, А. Максимов юлташсем кулленхи нормăна ялан ирттерсе тултараççĕ.

П. Голицын юлташ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Путь коммунизма» колхозра çурт-йĕр тăвас ĕçсем вăйланса пыни çинчен каласа парать. Ку ялхуçалăх артелĕ юлашки çулсенче хуçалăхпа организаци енĕпе тĕреклenсех пырать. Çавна май кунта общественлă çуртсем тума укçа-тенкĕ, тырпул нумай уйăрнă. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, колхоз кăçал çил арманĕ, зерносушилка, пушар сарайĕ, фермăра ĕçлекенсем валли пӳрт, мунча тунă.

Колхоз çулсеренех пысăк тухăçлă пахча çимĕç ӳстерет,—тесе пĕлтерет малалла автор.—Çавна май ялти строительсем кăçал 20 тонна пахча çимĕç вырнаçмалăх хранилище туса лартнă. Выльăх-чĕрлĕх фермисем тавраш ĕнче 10 пĕве çĕнĕрен тунă, кивисене тарăнлатнă. Колхозра хатĕрленĕ кирпĕчрен çурма башни тунă.

Паллах, колхозсенче общественлă çуртсем тăвас ĕçе анлăн туса пырас тесен, строительство материалĕсем çителĕклĕ пулмалла. Çакна асра тытса, нумай колхозсенче вырăнти материалсем ытларах хатĕрлеме, вĕсемпе анлăн усă курма тăрăшаççĕ. Муркаш районĕнчен **А. Федотова** юлташ пĕлтернĕ тăрăх, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра вырăнти материалсем ытларах хатĕрлес шутпа ятарласа бригада организациленĕ. Ăна ĕçта колхозник С. Данилов ертсе пырать. Бригада кĕске вăхăтрах 17 пине яхăн саман кирпĕч хатĕрленĕ. Саманран виçĕ автомашина вырнаçмалăх гараж туса лартнă. Кунсăр пуçне саман кирпĕчренех чăх-чĕп вити тума палăртнă.

Ăшă та çутă витесем туни выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне пĕрмай ӳстерсе пыма пулăшать, тесе çырать малалла автор. Икĕ-виçĕ çул каялла колхоз выльăхĕсене сивĕ çуртсенче усранă, çавăнпа та сĕт, аш-какай сахал туса илнĕ. Халĕ, çĕнĕ те ăшă витесенче выльăхсене усрама тытăнсан, ĕç чылай лайăхланчĕ. 1955 çулта кашни сыпа аминчен 5-шер çура илнĕ пулсан, кăçалхи августăн 15-мĕшĕ тĕлне 15-шер çура илнĕ. Иĕлтĕрхинчен 540-шер литр ытларах сĕт суса илнĕ.

Кăçал чылай колхозсем пысăк лаптăк çине кукуруза акса хăварчĕç. Нумай çĕрте çак паха культура аван ӳснĕ. Кукуруза силосĕ ытларах хывса хăварас тесен, силос траншейисемпе башнисем çителĕклĕ пулмалла. Республикăри малта пыракан колхозсенче силос сооруженийĕсем тăвасси анлă сарăлнă. Елчĕк районĕнчи «Трактор» колхозри строительство бригадин членĕ **Н. Петров** çапла пĕлтерет:

«Çак кунсенче ялти строительсем ырми-канми ĕçлеççĕ. Выльăх витисем тунипе пĕрлех вĕсем силос сооруженийĕсем тăваççĕ. Башня тума çĕрте куллен икĕ машинăпа кирпĕч турттараççĕ. З. Галкин, Д. Шашков платниксем уйрăмах хастарлă ĕçлеççĕ».

Г. Мытников юлташ (Етĕрне р.) Калинин ячĕпе тăракан колхозри строительство ĕçĕсем çинчен пĕлтерет.

Етĕрне районĕнчен **И. Львов**, Чкаловски районĕнчен **И. Марков**, Елчĕк районĕнчен **А. Дудин**, Советски районĕнчен **Н. Андреев** юлташсем те уйрăм колхозсенче строительство ĕçĕсене лайăх йĕркелени çинчен пĕлтереççĕ.

Анчах çакна каламалла: халлĕхе колхозсенче общественлă çуртсем тăвас ĕçе пур çĕрте те кирлĕ пек йĕркелесе янă теме çук. Калинино районĕнчи «Коммунизм» колхозра кăçал общественлă çуртсем нумай тума палăртнă, тесе çырать **М. Герасимов** корреспондент. Материалсем чылай хатĕрленĕ. Апла пулин те ĕç вăраххăн пырать. Строительство бригади членĕсем ĕçе вăхăтра тухмаççĕ. Хăшпĕр кун 13 çын ĕçлес вырăнне 8 çын кăна ĕçлет.

Халĕ çурт-йĕр тумалли хĕрӳллĕ вăхăт. Строительство ĕçĕсене хăвăртрах тăвассишĕн кĕрешесси—ялсенчи строительсен хисеплĕ тивĕçĕ. Кашни колхозрах паха та илемлĕ общественлă çуртсем, ăшă витесем ытларах пулччăр.

Марсинель трагедийĕ

Телеграф хурлăхлă хыпар илсе килчĕ: Бельгири Марсинель шахтинчи инкек вăхăтĕнче шахтерсем 260 çынна яхăн вилнĕ. Бельги хурлăхлă. Пĕтĕм çĕршыври ĕçсыннисем шахтерсен тăлăха юлнă çемйисемпе пĕрле хурланаççĕ...

Çак инкек мĕнле пулнă-ха? Уншăн кам айăплă-ха?

Августăн 8-мĕшĕнче ирхине Шарлеруа хули çывăхĕнчи Марсинель шахтинче, пушара пула, шахтăран ларса хăпармалли татăлса аннă. Çак вăхăтра шахтăра 800—1.000 метр тарăнăшĕнче 260 горняк ытла ĕçленĕ. Шахтăри вут-çулăм унта хупăнса юлнă çынсем патне хăвăрт кĕме май паман. Вĕсене çăлса хăварас тĕлĕшпе ĕçлекен отрядсем пиллĕкмĕш талăкра çĕр айĕнчи галерейăсем патне çитнĕ. Анчах çак вăхăтра унта вилнĕ çынсем кăна пулнă! Отрядсем калама çук йывăр условисенче ĕçленĕ: шахтăра 45 градус вĕри, тĕтĕмпе пăс тăнă, çавăн пирки нимĕн те курăнман, тăпра час-часах ишĕлсе аннă.

Шахта патĕнче темиçе талăк хушши пĕр хыпарсăр çухалнă горняксен аппăшĕсем, тăванĕсем хыпар кĕтнĕ. «Çынсен куççулĕ,—тесе çырнă Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ,—питĕ хурлăхлă: шанчăк минутран минута пĕтсе пынă. Каç пулса çитсен вăйлă çумăр пуçланнă. Çынсем йĕпе-сапаран мĕн чухлĕ те пулин сыхланма палаткăсем лартнă. Шахтăран инçех те мар трамвай вагонĕсем ретĕн-ретĕн тăнă, унта та çынсем çĕр каçнă. Шахтăран тĕтĕм явăнса хăпарать, пĕр чĕмсĕр тăракан çынсен пичĕсемпе тумтирĕ çине хĕрĕм ларать. Сехетсем иртеççĕ... Шахтерсене çăлса хăварас тĕлĕшпе ĕçлекен командăсен членĕсем шахтăсенчен халран кайса тухаççĕ. Вĕсем нимĕн те каламаççĕ, анчах вĕсен хурлăхлă пичĕсем çине пăхсанах нимĕнле шанчăк та юлманни курăнать. Халăх каллех шăп тăрать...»

Августăн 13-мĕшĕнче Марсинель шахтинче инкеке лексе вилнĕ шахтерсен пĕрремĕш ушкăнне пытарнă. Вĕсене пытарма 150 пин çынна яхăн пухăннă. Çав шутра шахтăра вилнĕ горняксен юлташĕсем шахтер лампочкисем тытса пынă, вĕсемпе пĕрле профсоюз организацийĕсемпе ытти организацисен нумай делегацийĕсем пулнă.

Бельгири хаçатсем çапла çыраççĕ: Марсинель шахтинчи инкек вăл çак çĕршыври çĕр кăмрăк промышленность историйĕнчи чи пысăк катастрофа. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн генеральнăй секретарĕ Луи Сайян Бельгири ĕçсыннисен пĕтĕмĕшле федерацине телеграмма янă. Телеграммăра вăл Бельгири шахтерсемпе пĕрле хурланни çинчен Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн 85 миллион членĕ ячĕпе пĕлтерет.

Çак вăхăтрах çĕршер шахтерсем инкеке лексе вилнĕшĕн айăплă çынсене ответ тыттарма требовани лартакан сасăсем вăйлăрах та вăйлăрах илтĕнеççĕ.

Общественноçăн йышлă сийĕсем çакна ăса илтереççĕ: юлашки çулсенче Бельги шахтисенчи катастрофăсем кулленхи явлени пулса тăнă. 1947 çултан пуçласа 1956 çула çитиччен кăна Бельгире çавнашкал инкеке лексе 1.164 шахтер вилнĕ. 1954 çулхи майпа октябрь уйăхĕсенче тата 1956 çулхи февраль уйăхĕнче уйрăмах пысăк катастрофăсем пулнă. Вĕсен тĕп сăлтавĕ Бельги шахтисенче хăрушсăрлăх техникине начар йĕркелени пулса тăрать. Бельгири нумай шахтăсем çурри таран юхăнса çитнĕ, час-часах акă нумай шахтăсене хупма тивет. Вĕсен хуçисем—Бельги капиталисчĕсем—«усă кӳмен расходсем» тăвасшăн мар, шахтăсенче вучухнехи вентиляци оборудованийĕ вырнаçтарса лартасшăн мар. Çак оборудовани газ взрывĕсем пуласшăн чылай чакарнă пулĕччĕ. Вĕсем шахтăсенчи тĕрекесене çĕнетме, шахтăран хăпармалли механизмсене, пушартан сыхланмалли хатĕрсене лайăхлатма тăрăшмаççĕ. «Çакнашкал ĕçсем туса мĕншĕн укçа пĕтермелле-ха,—тесе шутлаççĕ шахтăсен хуçисем,—пурпĕрех шахтăсене часах хупма тивет вĕт». Вĕсем çĕр айĕнчи питех те йывăр условисенче ĕçлекен çынсен пурнăçĕпе сывлăхĕ çинчен шухăшламаççĕ те. Кунсăр пуçне тата çакна калас пулать: Бельгири шахтерсен ĕç укçи ытла та çителĕксĕр, вĕсем начар пурăнаççĕ. Çакă та ăнтĕ шахтăсен хуçисем пысăкран та пысăк усламсем илме тăрăшнинчен килет.

Бельгири çĕр кăмрăк промышленноçĕнче ĕçлекенсене сахал тӳлеççĕ, шахтăсенчи ĕç условийĕсем питĕ йывăр, унта час-часах инкек-синкек пулать. Çакна кура ăнтĕ Бельгире шахтăсенче ĕçлеме ĕç вăйĕ тупма ытларах та ытларах йывăрланса пырать. Çавна май Бельги капиталисчĕсем шахтăсенче ĕçлеме рабочисене Италирен тата ытти çĕршывсенчен пухаççĕ. Çапла туса, сăмах майĕн каласан, Итали влаçĕсем пулăшнă. Рабочисем урăх çĕршывсене ĕçлеме кайни çĕршыври ĕçсĕрлĕхе чакармалли чи лайăх меслет пулса тăрать, тесе шутланă вĕсем. Калас пулать, официальнăй даннăйсем кăтартнă тăрăх, хальхи вăхăтра Италире ĕçсĕр тăрса юлнисем 2 миллион çынна яхăн шутланаççĕ. «Хĕн-хурпа ĕçсĕрлĕхе кура,—тесе çырать Римра тухса тăракан «Паэзе сера» хаçат,—итальянецсем ирĕксĕрех ют çĕршывсенче, çав шутра Бельгири çĕр кăмрăк шахтисенче тăранмалăх ĕçлесе илме тăрăшаççĕ.

Бельгири шахтăсен хуçисем, влаçсен пулăшăвĕпе усă курса, Итали эмигранчĕ-горнякĕсене хĕсме пултараççĕ. Горняксем пĕчĕк ĕç укçине, йывăр ĕç условийĕсене хирĕç протестлеме хăтлансанах вĕсене Бельгирен кăларса яраççĕ. Çак рабочисене вара ĕçсĕрлĕх ытла ӳссе кайнă Италире халиччинхи чухăн пурнăç кĕтет.

Бельгири итальянец-шахтерсен йывăр условисенче пурăннипе Италири буржуалла хаçатсем те йышăнаççĕ. Çак кунсенче «Стампа» хаçат çапла çырнă: 50 пин итальянец-шахтер Бельгире мĕнле условисенче ĕçлесе пурăнни Итали влаçĕсене пачах та интереслентермест. Италири Коммунистсен партийĕн органĕ «Унита» хаçат çапла çырать: юлашки 9 çул хушшинче Бельгири шахтăсенче инкеке лексе вилнĕ 1.164 шахтертан 435 çын итальянецсем пулнă.

Марсинель шахтинчи инкек çинчен каланăн хурлăхлă хыпар Итали халăхне çав тери тарăхтарать. (Шахтăра вилнĕ çынсенчен çурри ытларахăшĕ—итальянец-шахтерсем). Прогрессивлă хаçатсем çапла калаççĕ: Марсинельти катастрофăпа ытти катастрофăсем вăхăтĕнче çĕршер çынсем вилнĕшĕн Итали влаçĕсем те нумай айăплă, мĕншĕн тесен вĕсем ĕçсыннисене йĕркеллĕ ĕçлесе пурăнма условисем туса памаççĕ, çакна пула нумай итальянецсен ирĕксĕрех ют çĕршывсенче ĕç шырама тивет.

Бельгири тата урăх çĕршывсенчи прогрессивлă хаçатсем çĕр кăмрăк шахтисен хуçисене ответ тыттарма требовани лартаççĕ, мĕншĕн тесен ытларах та ытларах пуйма тăрăшакан хуçасем çынсен пурнăçĕ çинчен нимĕн чухлĕ те шухăшламаççĕ. Бельгипе Италире забастовкăсемпе митингсем пулса иртеççĕ. Забастовкăсемпе митингсене хутшăнакан çынсем, инкеке лексе вилнĕ юлташĕсене пуç тайса асăнса, малашне катастрофăсем пулмалла мар тума мерăсем йышăнма татăклă требованисем лартаççĕ.

Марсинель шахтинче халĕ те пушар вĕрет. Хăйсен çывăх çыннисем инкеке лексе вилнĕшĕн пиншер çынсем хурланаççĕ. Çак вăхăтра Бельгипе Италире кăна мар, Хĕвеланăç Европăри ытти çĕршывсенче те ĕçсыннисем хăйсен пурнăçне лайăхлатассишĕн, предприятисен хуçисен ирĕксĕр ĕçсене хирĕç, Марсинель трагедийĕ патне илсе çитерни условисене хирĕç пуçланă кĕрешӳ çĕнĕ вăйпа сарăлса пырать.

Г. ДРАГУНОВ.

Совет халăхĕ Югославири халăхсене панă парне

БЕЛГРАД, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине Белград пристанне «Полтава» теплоходпа кăкарнă баржăсен караванĕ пырса çитнĕ. Трюмсенче, палубăсем çинче—тракторсем, комбайнсем тата ытти ялхуçалăх машинисем. Ку вăл—машина-трактор станцийĕ; совет халăхĕ Югославири халăхсене панă парне. Ăна Федеративлă Югослави Халăх Республикин Президенчĕ Иосип Броз Тито Совет Союзĕнче пулнă вăхăтра Совет правительстви Югославири халăхсене совет халăхĕ ячĕпе парнеленĕ.

Комплекслă МТС 65 тракторпа, тĕштырă пухса кĕртмелли 35 комбайнпа, кукуруза пухса кĕртмелли 32 комбайнпа, 12 жаткăпа, грузсем турттармалли 16 автомашинăпа, комбайнсем патĕнче пулăшуллă ĕç тăвакан 18 машинăпа, мастерскойсем валли кирлĕ оборудованипе, запаслă пайсемпе, МТС-сен типовой плăнĕсемпе, клуб валли кирлĕ оборудованипе тата ытти япаласемпе тăрать.

МТС Воеводинăри Румра вырнаçать. Çакă вăл—Сербири халăх ирĕклĕхĕшĕн пынă вăрçă вăхăтĕнче чапа тухнă район.

Пристань çине Серби исполнительнăй вечин председателĕ Иован Веселинов, Серби исполнительнăй вечин председателĕн заместителĕ Воя Лекович, союзлă исполнительнăй вече членĕ Никола Минчев, Югославири кооперативсен центральнăй союзĕн председателĕ Риста Антунович, Белград районĕнчи халăх комитечĕн председателĕн заместителĕ Иован Янкович тата ытти официальнăй представительсем, çавăн пекех СССР посолĕ Н. П. Фирюбин пынă.

Хăнасем машинăсемпе МТС оборудованине пăхса тухнă хыççăн пристаньре митинг пулнă. Югославири халăхсене Совет Союзĕн парнине парса, СССР посолĕ Н. П. Фирюбин çапла каланă:

— Совет халăхĕ Югославири халăхсене панă çак парне пирĕн халăхсем хушшинчи тăванла туслăха, ĕмĕр-ĕмĕре пыракан туслăха палăртса тăрать.

Серби исполнительнăй вечин председателĕ Иован Веселинов, парне йышăнса, çапла каланă:

— Юлашки çулсенче Совет правительстине совет халăхĕ хăйсем Югославири халăхсемпе туслă пурăннине мĕн тери хакланине кăтартса пама нумай ĕçсем турĕç. Пире вăрçă тапхăрĕнчи пĕрлехи кĕрешӳ, вăрçă хыççăнхи вăхăтра пĕрле тăрăшса тунă ĕç çыхăнтарса тăрать. Çак парнешĕн эпир питĕ хавас. Вăл совет халăхĕпе Совет правительстви Югославири халăхсене юратнине кăтартса парать. Вăл пирĕн çĕршывсемпе халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетме пулăшĕ. Çак парне пирĕн çĕршывсем хушшинчи туслăх çирĕпленсе пынине кăтартакан символ пулса тăрать. Парнешĕн, пирĕн халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетме тăрăшнăшăн эпир совет халăхĕпе Совет правительстине тав тăватпăр.

Сывă пултăр Совет Союзĕпе Югославири халăхсен туслăхĕ!

Пурте тăвăллăн алă çупаççĕ. Хăватлă кран кукуруза пухса кĕртмелли комбайна баржа çинчен çĕклесе хăпартать.

Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки Лондонра пухнă конференци

ЛОНДОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки пухнă конференцин черетлĕ ларăвĕ паян вырăнти вăхăтпа 15 сехетре уçăлнă.

Ĕнерхи ларура конференцие пăхса тухма икĕ документ тăратнă. Вĕсенчен пĕри—Инди делегацийĕн сĕнĕвĕсем, тепри—США делегацийĕн сĕнĕвĕсем. Çак икĕ плана пăхса тухма вăхăт пултăр тесе, ĕнерхи ларăва паянхи куна хăварнă.

Паянхи ларура пуринчен малтан Пакистан ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Чоудхури сăмах илнĕ. Пакистан делегацийĕ, çавăн пекех Иран, Эфиопи тата Турци делегацийĕсем ячĕпе те, США делегацийĕн сĕнĕвĕсене хăшпĕр тӳрлетӳсем кĕртсе ырласси çинчен каланă. Чоудхури çав тӳрлетӳсене вуласа панă. Тӳрлетӳсем США сĕнĕвĕсен тĕп шухăшне нимĕн чухлĕ те улăштармаççĕ.

Д. Даллес çав тӳрлетӳсемпе килĕшни çинчен çийĕнчех пĕлтернĕ.

Унтан конференцире сĕннĕ проектсем çине хăйсем мĕнле пăхни çинчен Индонези, Швеци, Австрали, Испани, Итали, Çĕнĕ Зеланди, Норвеги, Дани, Франци, Цейлон, Федеративлă Германи Республики, Япони, Голланди, Португали представителĕсем тухса каланă.

Çакна палăртас пулать: США делегацийĕ тăратнă çĕнӳсене ырласа каланă государствăсен представителĕсем те Суэц ыйтăвне татса панă чухне, Египетăн суверенлăх прависене аса тытма уйрăмах кирлине палăртнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах вĕсем каналпа усă куракан государствăсен интересĕсене шута илме кирли çинчен каланă.

Паянхи ларура СССР делегацийĕн пуçлăхĕ Д. Т. Шепилов тухса каланă.

Тимĕр руди вылтакан вырăн тупнă

Синьхуа агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Китай Халăх Республикинчи Шаньдун провинцийĕн центрти районĕнче тимĕр руди нумай вылтакан вырăн тупнă. Ку район пекеланакан çĕр кăмрăкĕ тата вут-хĕме тӳсекен материалсем пур вырăнсен сывăхĕнче. Çавна май кунта металлурги предприятийĕсем тума условисем лайăх.

Çĕр айĕнчи пуянлăхсене шыраса çӳрекенсен ушкăнĕсем Хэбэй провинцийĕн кăнтăрти пайĕнче те тимĕр тăприлĕ вырăнсем тупнă. (ТАСС).

Финлянди халăхĕн йышĕ

ХЕЛЬСИНКИ, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Главнăй статистика бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, çак çулталăкăн пуçламăшĕ тĕлне Финляндире 4.288.521 çын пурăннă. Çав шутран хуласемпе местечкăсенче 1.504.100 çын, ураăхла каласан, çĕршыври пĕтĕм халăхăн виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ ытла пурăннă.

Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, Финлянди халăхĕн йышĕ 40 пин çынна ӳсĕн, урăхла каласан, 1 процент патнелле ӳснĕ. Вăтам шутпа илсен, пĕр пин арçын пуçне 1.081 хĕрарăм пулнă.

Хĕвеланăç Германири коммунистсене хирĕçле кампани

БОНН, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнă хыççăн Хĕвеланăç Германи пропаганди Федеративлă Германи Республикинче сыхланса юлнă прогрессивлă организацисене хĕсме тытăнать. Çакă вăл, уйрăммăн илсен, Федеративлă Германи Республикин пĕтĕм Германи ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен министерствин статс-секретарĕ Тедик каланă сăмахсенче палăрать.

«Ди вельт» хаçатра каланă тăрăх, Тедик «ытанса ĕçлекен коммунистла организацисен ĕçĕсем вăйланасран» шикленет. Çавнашкал организацисен шутне вăл, сăмахран, пĕрлĕхшĕн, миршĕн тата ирĕклĕхшĕн кĕрешекен нимĕçсен союзне кĕртет, Тедик каланă тăрăх, çак организаци Наци фрончĕн Хĕвеланăç Германири комитечĕн задачисен пĕр пайне пурнăçласа пырать. Тедик шучĕпе, тесе çырать хаçат, Германин икĕ пайĕнчи наукăпа культура деятелĕсем пĕр-пĕрипе тĕл пулни, ĕçсĕр тăрса юлнисен, беженецсен, христиансен комитечĕсен тата Хĕвеланăç Германири ĕçсыннисен ытти организацийĕсен ĕçĕ «коммунистсем хăйсен ĕçне вăйлатнине» пĕлтерет. «Рабочи класс пĕрлĕхлĕ пулса ĕçлени» «коммунистсем енчен килекен тĕп хăрушлăх пулса тăрать», тесе шутлать Тедик. Хĕвеланăç Германири ĕçсыннисен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен организацийĕсене те Тедик «коммунистсен организацийĕсем» тесе шутлать.

ГЕРМАНИРИ РАБОЧИ КЛАСА ХЕСЕРЛЕНИНЕ ХИРĔÇ

БЕРЛИН, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарни çинчен Хĕвеланăç Германири хаçатсем нимĕнрен те ытларах çыраççĕ.

«Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнă, унăн бюровĕн çуртĕсене пичетлесе илнĕ, типографи машинисене конфискациленĕ, унăн организацийĕсене саланса янă пулсан та, Германири Коммунистсен партийĕ пĕтсе ларнă тесе никам та калаймĕ. Çапла ĕнтĕ, Коммунистсен партине ĕçлеме чарса партипе эпир хамăршăн нимĕнле усă та тăваймарăмăр», тесе çырать Хĕвеланăç Германири монополистсен органĕ «Дейче цейтунг унд Виртшафтцейтунг» хаçат.

Хĕвеланăç Германири тепĕр хаçат «Нюрнбергер нахрихтен» çапла çырать: «Федеративлă Республикăра коммунистсене хирĕç тăвакан ĕçсем вырăнлă маррине Коммунистсен партийĕн адвокачĕ пулмасăрах ăнланса илме пулать». Хаçат çакна палăртать: Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарни Германие пĕрлештересшĕн нихăш енчен те пулăшас çук.

Хаçатсем Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнă пирки Германин икĕ государствинчи политикăлла тата общественлăла деятельсем тунă заявленисене пичетлесе кăлараççĕ.

Потсдам округĕнчи халăх представительствин депутачĕсем Германири социал-демократсен партийĕн Анат Саксони çĕрĕн ландтагĕнчи фракцине çыру янă. Çырура вĕсем çак ландтага Федеративлă Германи Республикинче коммунистсем тĕлĕшпе тăвакан терррорла ĕçсене хирĕç тăма чĕнеççĕ.

ТРАКТОРАН ЗАПАС ПАЙĔСЕНЕ ТĂВАКАН ЗАВОД ЛАРТАÇÇĔ

Китайри Хэнань провинцийĕнчи Чжэнчжоу хулинче трактор запас пайĕсене тăвакан завод лартма тытăннă. Заводра çавăн пекех трактор юсакан тата запас пайĕсене пухса çĕнĕ трактор тăвакан мастерскойсем валли инструментсем туса хатĕрлемелле.

Çав завода 1959 çулта пĕтĕмпех туса пĕтерме палăртнă. Унăн пĕр пайĕ кăçалах ĕçлеме пуçлать.

Хуласемпе ялсенче

Сатира хаçачĕ

...Смена вĕçленчĕ. Пир тĕртекенсем пысăк та çутă цехсенчен тухса урам еннелле утрĕç. Хĕрсен пĕр ушкăнĕ комбинат картишĕнче чарăнса тăчĕ.

— Тантăшсем, сатира хаçачĕн çĕнĕ номерĕ тухнă,—терĕ хĕрсенчен пĕри.— Атьăр, вулар.

Нумайччен чарăнса тăчĕç хĕрсем хаçат умĕнче. Вĕсем патне ытти работницăсем те пырса тăчĕç...

Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнчи комсомол организацийĕн комитечĕ кăларса тăракан сатира хаçачĕн çĕнĕ номерĕ умĕнче яланах пир тĕртекенсемпе çип арлакансене йышлăн курма пулать. Хаçат производствăри çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăларать, кахалсене, брак тăвакансене, ĕçсе урăм-сурăм çӳрекенсене çивĕч питлет.

Акă виçĕмкун тухнă хаçат. Ку номерте тăватă ӳкерчĕк пур. Вĕсенчен пĕри пир тĕртекен фабрикăри виççĕмĕш цехра ĕ; вырăнне тирпейсĕр тыткалани, станоксем патĕнче кирлĕ-кирлĕ мар япаласем купаланса выртни çинчен калать.

Хаçат брак тăвакансене те аса илнĕ. Сăмахран, виççĕмĕш цехри хăшпĕр ткачихăсем юлашки вăхăтра продукци пахалăхне начарлатнă. Виçĕ смена хушшинче 361 метр пир-авăр брак тĕртсе кăларнă. Хаçатра çавна критиклесе ӳкерчĕк тунă, начар продукци кăларакан ткачихăсем пирки сăвăласа çакăн пек çырса хунă:

Вĕсем халăх пурлăхне
Пăсмашкăн та хирĕç мар.
Çапла тăвакансене
«Иккĕ» паллă хак парар.

Акă тепĕр ӳкерчĕк. Ун айне Е. Степановăпа А. Иосифова мотальщицăсем ĕç вăхăтĕнче харкашни, ытти работницăсене те чăрмантарни çинчен çырнă.

Кулленхи пурнăçра хăйне кирлĕ пек тыткалама пĕлмен В. Норкин комсомолеца питлесе хаçат карикатура ӳкернĕ.

Кашни ӳкерчĕкех пĕлсе, сăрăсемпе лайăх усă курса туса хатĕрленĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ хаçата рабочисем юратса вулаççĕ.

Комбинатри комсомол организацийĕн комитечĕ сатира хаçачĕ кăларса ырă ĕç тăвать.

И. ФОМИН.

Ӳкерчĕк çинче: сатира хаçачĕн çĕнĕ номерне вулаççĕ.

Ф. Иванов фотоӳкерчĕкĕ.

Тĕрлĕ хыпарсем

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Знамя Ленина» колхозра кăçал 150 çын вырнаçмалăх çĕнĕ клуб туса лартнă.

И. ЛИСОВ.

Çĕнĕ Пĕршĕнерти «Соревнование» колхозра (Канаш р.) ача ясли уçнă. Унта кунсерен 80 ача çӳрет. Çакă вăл колхозницăсене ĕçе активлăн хутшăнма май парать.

В. ИВАНОВ.

Апаш ялĕнче (Шупашкар р). сатирăлла стена хаçачĕ туса тăма пуçланă. Хаçата колхозниксем йышлăн çырса тăраççĕ. Халĕ хаçатăн иккĕмĕш номерĕ тухнă.

В. КОНСТАНТИНОВ.

Тăвай районĕнчи «Звезда» колхозра М. Ласточкина 16 çул почтальон пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне юратса тăвать, хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерт.

Г. ИЛЬИН.

Комсомольски районĕнчи Асанкасси ялĕнчи «колхозниксен пурнăçĕ çуллен лайăхланать, колхозран илекен тупăш ӳссе пырать. Вĕсем çĕнĕ çуртсем нумай лартаççĕ. Çак кунсенче кăна 8 çемье çĕнĕ çурт тунă. Чылай колхозниксем кивĕ çурчĕсене юсаççĕ, çĕнĕ хуралтсем туса лартаççĕ.

В. СОРОКИН.

Советски районĕнчен 13 комсомолецпа çамрăк Печера Чугун çулĕн иккĕмĕш линине тума кайрĕç. Вĕсем хушшинче «Коммунизм» колхозри Ю. Стрельцов, Ю. Шерипов, В. Королев, Г. Михайлов комсомолецсем.

И. АНДРЕЕВ.

Тăватă çул ĕнтĕ Юлия Саркова Вăрнар районĕнчи «Первое Мая» колхозра пăрусем пăхать. Пăрусене лайăх пăхса ӳстернĕшĕн ăна иртнĕ çул пĕр пăру панă.

А. ТИМОФЕЕВ.

Нăрваш (Тăвай р.) иртнĕ уйăхра перекет касси агентстви ĕçлеме пуçларĕ.

Перекет касси ĕççыннисен укçине вклада йышăнмалли виççĕмĕш кварталти плана 102 процент тултарчĕ.

А. НИКОЛАЕВ.

Канашри вагонсем юсакан заводри ДОСААФ членĕсем çар ĕçне вĕренеççĕ. Кăçал Кочемасов юлташ ертсе пынипе парашютистсем 115 çын вĕренсе тухрĕç. Мотоциклпа çӳреме 15 çын вĕренет. Тĕл перекенсен ушкăнĕнче виçĕ команда.

И. ЖУРАВЛЕВ.

Красноармейски районĕнчи культура пайĕн агиткультбригади çак кунсенче колхозсене тухса кайрĕ. Вăл Ленин ячĕпе, Булганин ячĕпе тăракан, «Сталинец» тата «Волга» колхозсенче пулса концертсем пачĕ.

И. ЕРШОВ.

Çĕнĕ общежити пулать

Хуларан чугун çул станцине кайнă çĕрте, сылтăм енче, кирпĕчрен пысăк çурт тунине куратăн. Халĕ унăн карнизне купалаççĕ. Ку вăл Шупашкарти 123-мĕш стройтрестăн иккĕмĕш общежити пулать.

— Çак çурта декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне туса пĕтермелле. Унта иксĕр строитель 1957 çула кĕтсе илеççĕ,—каласа парать А. Редкокашин мастер.

Й. Пазин юлташ ертсе пыракан каменщиксен бригади тул енчи карниза купалать. Бригада июнь уйăх планне 138 процент тултарчĕ, июль уйăхĕнче тата нумайрах ĕç турĕ. Августра та ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пырать.

Суртăн тăваттăмĕш хутĕнче платниксен бригади (бригадирĕ В. Михайлов юлташ) ĕçлет. Вăл кĕçех пӳлĕмсен хăмаран е урăх çăмăл япаларан тунă стенисене йĕркене кĕртсе çитерет. Платниксен тепĕр бригади чӳречесене майлаштарать.

Я. ПРОКОПЬЕВ.

Шкул çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн

Шăмăршăри вăтам шкулта çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ.

Трахом чирĕпе кĕрешес ĕçе лайăх йĕркелес майпа ятарласа медпункт пӳлĕмĕ тунă.

Халĕ ачасене политехникăлла пĕлӳ парас тĕлĕшпе уйрăм мастерской çурчĕ тума пуçланă. Ăна çак кунсенче туса пĕтереççĕ. Мастерскойра виçĕ пӳлĕм пулмалла.

М. КАРИМОВ.

Чăваш студенчĕсем— Алтай крайĕнчи совхозра

Эпир, чăваш педагогика тата ялхуçалăх институчĕсен студенчĕсем, Алтай крайĕнчи Родински районĕнчи «Степной» совхозра ĕçлетпĕр. Ку совхозăн çĕрĕ 37 пин гектар, вăл шутран 20 пин гектар çине тулăпа сĕлĕ акнă. Совхоз 20 пин сурăх, 700 ĕне, 400 лаша тытать.

Эпир палаткăсенче пурăнатпăр. Хĕрсем валли илемлĕ вагончĕксем хатĕрленĕ. Кунтах столовăй вырнаçнă. Ĕçе машинăсемпе каятпăр. Утă хатĕрленĕ çĕрте ĕçлетпĕр, тырă сăвăратпăр, алатпăр. Нумай студентсем комбайн çинче ĕçлеççĕ.

Боевой листоксем туха тăраççĕ. Кашни кун кам мĕн чухлĕ ĕçленине курăнмалла çĕре çырса пыраççĕ. Краснов, Зайцев, Кязин, Отачкина, Шуркина, Михайлова тата ыттисем те сменăри нормăсене яланах ирттерсе тултараççĕ.

Ăнса пулнă тырпула пухса кĕртес ĕçе хутшăнма май килнĕшĕн эпир чĕререн савăнатпăр.

Педагогика институтĕнчи студентсен ячĕпе
В. МАТВЕЕВ.

ПУЛНИ-ИРТНИСЕМ

В. Топленникова В. Зерцалов иккĕшĕ те вăй-питти çамрăк çынсем: Топленников çирĕм пиллĕкре, унăн юлташĕ Зерцалов вунултăра кăна. Çак икĕ çамрăк хăйсен сăн-сăпатне тăхçанах çухатнă. Топленников икĕ хутчен те судпа айăпланнă, Зерцалов та нумай пулмасть тĕрмерен тухнă.

«Пулăçă пулăçăна инкăранах курать», тенĕ пек Топленниковпа Зерцалов та хăйсем тĕрмерен тухсанах пĕр-пĕрипе паллашса туслашма ĕлкĕрнĕ.

Нумай пулмасть вĕсем çула май Сĕнтĕрвăрри хулине çитсе чарăннă. Часах вĕсем пĕр каçхине, хуралçă çуккипе усă курса, горпо магазинĕн кантăкне ватнă, хаклă йышши пир-авăр, сехетсем, фотоаппаратсем — пурĕ çичĕ пин тенкĕлĕх вăрласа тухнă.

Çав каçах пăрахут çине ларса вăрăсем Шупашкар хулине çитсе ӳкнĕ, унтан вара, поезд çине ларса, Канаш хулине тухса тарнă.

Кунта вĕсен çулĕ татăлнă: милици работникĕсем вăрăсене тытса чараççĕ, çаратса пухнă пурлăха пĕтĕмпех шыраса тупаççĕ. Япаласене магазина каялла тавăрса панă.

Вăрăсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттараççĕ.

Çанталăк

Шупашкарти Гидрометбюро пĕлтернĕ тăрăх, августăн 24—25-мĕшĕсенче Чăваш республики, территорийĕнче улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулмалла, вырăнĕ-вырăнĕпе кĕске вăхăт хушши çӳмăр çумалла, аслати авăтмалла, вырăнĕ-вырăнĕпе тĕтре пулмалла. Çил вăйлă пулмалла мар. Сывлăшри температура çĕрле 8—13 градус, кăнтăрла 17—22 градус ăшă пулмалла.

Редактор М. Н. ЯКИМОВ.

«Росглавкоопплодоовощăн» Горькири бази 100 тата 150 литр кĕрекен пичкесем тума йăвс, çăка, юман клепкăсем; хыр-чăрăш тата ытти йывăçран çурнă хăмасем; помидор, купăста, улма ешĕкĕсем тумалли комплектсем; тĕрлĕ йышши пĕренесем, хăмасем, çавăн пекех ĕçе юрăхлă йывăç илет.

Йывăççем, хăмасем, клепкăсем тиесе яма база хăйĕн лимитĕнчен вагонсем уйăрса парать.

Договор тума çак адрес тăрăх ыйтса пĕлмелле: г. Горький, 13, ул. Советская, дом 8 (хула Совечĕпе юнашар). Тел. 4-32-88.

Кино

«РОДИНА». Августăн 24-мĕшĕнче кăнтăрлахи сеанссенче илемлĕ фильм «За власть Советов», каçхи сеанссенче — «Дерзкая девчонка».

Тĕнчери геофизика çулталăкĕ

Пирĕн планета—Çĕр хăй евĕрлĕ физикăлла япала пулса тăрать, унта (ун ăшĕнче, ун çийĕнче тата таврари атмосферăра) пĕр-пĕрипе çыхăннă тĕрлĕ явленисем пулса иртеççĕ. Çав явленисене уйрăм наука—геофизика тĕпчесе вĕренет.

Нумай тĕрлĕ геофизикăлла явленисен законĕсене лайăх тĕпчесе пĕлес тесен, çав явленисене Çĕр чăмăрĕ çинчи нумай вырăнсенче сăнас пулать. Çавăн пек сăнама кирли çинчен тахçанах пĕлнĕ. Юлашки 70 çул хушшинче Тĕнчери поляр çулталăкĕсене икĕ хут ирттернĕ (1882—1883 çулсенче тата 1932—1933 çулсенче). Пирĕн çĕршыври тата ытти нумай государствăсенчи ученăйсем хутшăннипе ирттернĕ поляр çулталăкĕсем наукăпа практикăра çавăн пек тĕпчевсем пысăк вырăнта тăнине кăтартса пачĕç.

Халĕ, Тĕнчери иккĕмĕш поляр çулталăкĕ хыççăн 25 çул иртсен, тĕнчери наука организацийĕсем Тĕнчери геофизика çулталăкне ирттерме йышăнчĕç. Ăна пысăкрах программа тăрăх организацилеççĕ, сăнавсем Çĕр чăмăрĕн поляр тăрăхĕнче кăна мар, унăн акваторти районĕсенче те пулаççĕ.

Тĕнчери геофизика çулталăкĕ 1957 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче пуçланать те 1958 çулхи декабрĕн 31-мĕшчен пырать. Наукăн çак пысăк ĕçне 40 государство ытла хутшăнаççĕ. Тĕнчери геофизика çулталăкне ирттерес ĕçе ертсе пыма тĕрлĕ çĕршывсенчи паллă геофизиксенчен ятарласа Тĕнчери комитет тунă, Совет Союзĕнчен унта икĕ представитель кĕрет.

Тĕнчери геофизика çулталăкĕ тăршшĕнче геофизика тĕпчевĕсем пуринчен ытла çак енĕпе пулса пымалла: метеорологи, атмосферăн çӳлти сийĕсен физики, çĕр магнетизмĕ, поляр çути, тӳпере çутатни тата космос пайăркисем.

Физикăра явленисем нумайăшĕ Хĕвел çути ӳкнипе сыхăнса тăнă пирки Хĕвел çинче пулса иртекен явленисене ялан сăнаса тăма йышăннă. Кунсăр пуçне, Çĕр чăмăрĕн широтисемпе долготисене тĕрĕсрех тĕпчесе пĕлме, океанографи енĕпе сăнавсем ирттерме, пăрсене, çĕр чĕтренине, йывăрăш вăйне тĕпчеме палăртнă.

Тĕнчери геофизика çулталăкне ирттернĕ чухне чи лайăх меслетсемпе, чи çĕнĕ приборсемпе усă кураççĕ, телеметрически майсемпе сăнавсем тăваççĕ, сăнавсем çинчен телефонпа, телеграфпа тата радиопа та пĕлтерсе тăраççĕ. Сăнавсем тунă чухне хăй тĕллĕн çырса пыракан тата хăй тĕллĕн паллă тăвакан аппаратсемпе анлăн усă кураççĕ. Вĕсем хушшинче ракетăсем çине вырнаçтарнă приборсем те пур. Ракетăсене Çĕр çинчен 100—150 километр çӳлĕшне яни геофизика тĕпчевĕсене питех те анлăн ирттерме май парать, атмосферăн çӳлти сийĕсенче пулса иртекен процессене, Хĕвел çинчи явленисене ытларах пĕлме пулăшать.

Тĕнчери геофизика çулталăкĕнче уйрăмах тимлĕ сăнавсем тумалли тапхăрсем пулаççĕ, сăмахран: çĕнĕ уйăх тунă, хĕвел тĕттĕмленнĕ, метеорсем кусна вăхăтсенче. Çавăн пек геофизикăлла явленисем вăхăтĕнче: магнитлă улшăнусем, ионосферăри улшăнусем пулнă чухне, поляр çути сисмĕ вăхăтра тата ытти çавăн пек вăхăтсенче сăнав пункчĕсене пур çĕре те (радиопа е ытти майсемпе) уйрăм ĕçсем туса ирттерме пĕлтерсе тăраççĕ. Америка ученăйĕсем пысăк ракета яма шутлаççĕ, вăл Çĕрпе пĕрле çаврăнса çӳремелле, çавăн пек ракета çине вырнаçтарнă автоматла аппарат радио тăрăх атмосферăн çӳлти сийĕсенчи процессем çинчен пĕлтерсе тăрĕ.

Совет Союзĕнчи геофизиксем Тĕнчери геофизика çулталăкне пикенсе хатĕрленеççĕ. Совет Союзĕн правительстви геофизика çулталăкне хатĕрленсе ирттерме укçа-тенкĕ çителĕклĕ уйăрса панă тата наука организацийĕсемпе министерствăсене чылай ĕçсем тума, сăнавсемпе тĕпчевсем ирттерме кирлĕ приборсем туса хатĕрлеме хушнă.

Совет Союзĕнче 1.0?0 метеорологи станцийĕ ытла тĕнчипе йышăннă программа тăрăх температурăна, атмосфера пусăмне, сывлăш нӳрлĕхне, çиле, çумăр пĕлĕчĕсене, çумăрпа юр çунине тата ытти явленисене те сăнаççĕ.

Çĕр магнетизмĕпе Çĕрти электричество токне сăнаса тĕпчекен станцисем пирĕн çĕршывра Сурçĕр полюсĕнче те, тропик тăрăхĕнче те пулаççĕ. Совет ученăйĕсем геомагнитлă явленисене сăнани геомагнитлă улшăнусен, магнитлă тăвăлсене тата кĕске вăхăта пыракан вариацисен ыйтăвне татса пама пулăшать. Çав сăнавсем питĕ интереслĕ пулмалла, мĕншĕн тесен Тĕнчери геофизика çулталăкĕ Хĕвел активлăхĕ чи пысăк тата электромагнитлă явленисем Çĕр çинче усăлнрах палăрнă вăхăтпа тĕл килет. Магнит вăйĕсем океансенче саралнине юри туса хатĕрленĕ. «Заря» ятлă магнитсăр шхуна çинчен сăнаççĕ, çав шхунăн пĕр пайне те тимĕртен е хурçăран туман.

Ученăйсем поляр çутипе тӳпере çутатнине сăнаса, нумай япаласем çинчен пĕлме шутлаççĕ. Поляр çути çисни çĕрĕн электромагнитлă вăйĕпе, Хĕвел çинчи процессемпе тата ионосферăри улшăнусемпе тачă çыхăнса тăрать. Çавăн законĕсене пĕлме ятарласа тунă станцисем поляр çутине комплекслă майсемпе сăнаççĕ, ун пек станцисем пуринчен ытла пирĕн çĕршывăн сурçĕр енче пулаççĕ.

Паллă ĕнтĕ, 100 километр çӳлĕшĕнчи тата унтан та çӳлерехри сывлăш сийĕсенче электричество зарядĕсем-ионсем чылай; çав сийсене ионосфера, теççĕ. Радио хумĕсем саралассн, çапла вара, радио тăрăх çыхăну тытас условисем атмосферăн çав сийĕсенчен питĕ нумай килеççĕ. Çавăнпа та Тĕнчери геофизика çулталăкĕ тăршшĕнче ионосфера мĕнле законсем тăрăх пулса пынине лайăх тĕпчесе пĕлеççĕ. Тĕпчесе пĕлме ятарласа тунă ионосфера станцийĕсенчен ионосферăна тайăлăк тата вертикаллă радио-пайăркасем ярса тĕрĕслеççĕ.

Тепĕр тĕрлĕ станцисем космос пайăркисене сăнаççĕ. (Космос пайăркисем—Çĕр атмосферине тĕнче уçлăхĕнчен татти-сыпписĕр килсе тăракан çав тери вĕтĕ япаласем, вĕсенче хăш чухне питĕ пысăк энерги пулать). Космос пайăркисем Хĕвел тата магнит активлăхĕпе, метеорологипе, ионосферăри явленисемпе тата геофизикăн ытти явленийĕсемпе çыхăнса тăнине тĕпчесе пĕлеççĕ.

Широтасем улшăннине, полюс куçнине пĕлес тĕлĕшпе ирттерекен геоастрономипе геодези сăнавĕсем, çавăн пекех Çĕр пĕр пек çаврăнманнине тĕпчени, вăхăтпа долготана шутласа пĕлни государство картографийĕшĕн, Вăхăт службишĕн тата Çĕрĕн шалти тытăмне пĕлес тĕлĕшпе те пысăк вырăнта тăраççĕ. Çакăнпах йывăрăш вăйне сăнаса пĕлни те, çавна пула Çĕр кӳлепине, çĕр хуппин тарăнти тытăмне тĕпчесе вĕренни те çыхăнса тăраççĕ.

Тĕнчери геофизика çулталăкĕн программинче совет ученăйĕсем тăвакан океанографи сăнавĕсем пысăк вырăнта тăраççĕ. Океансемпе тинĕссенчи юхăмсене, шыв температурине, химилле составне, Арктикăпа Антарктикăри гидрометеорологи режимне сăнаççĕ. Çак ĕçсене тума пирĕн ученăйсен экспедицийĕсене организацилеççĕ, вĕсем океанографи тĕпчевĕсен тĕнчипе йышăннă программин чылай пысăк пайне пурнăçлас ĕçе хăйсем çине илеççĕ. Тĕнчери геофизика çулталăкĕн программипе поляр унки сывăхĕнчи, пăрсене, континентсенчи пăрланнă вырăнсемпе юр выртакан вырăнсене тĕпчесе пĕлес ĕçсем те кĕреççĕ, çак сăнавсем пăрлă вырăнсем улшăнни климат улшăннипе çыхăнса тăнине пĕлме май параççĕ.

1957 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче тĕрлĕ çĕршывсенчи геофизиксемпе метеорологсем йышăннă программа тăрăх Çĕр чăмăрĕн тĕрлĕ вырăнĕсенчи геофизикăлла явленисене сăнама тытăнаççĕ. Унтан вĕсем пухнă материалсене тĕпчеççĕ, тĕрлĕ явленисен уйрăмлăхĕсене танлаштарса пăхаççĕ, вĕсем хушшинчи çĕнĕ çыхăнусене палăртаççĕ, геофизика законĕсене тĕрĕсрех пĕлсе çитеççĕ. Çаксем пурте çанталăк мĕнле пуласси лайăхрах пĕлсе тăма, Çĕрĕн электромагнитлă вăйĕсенчен килекен чылай явленисене—радио тăрăх çыхăну тытас тĕлĕшпе питех те пысăк вырăнта тăракан явленисене—малтанах пĕлме нумай пулăшаççĕ. Çак сăнавсем Çĕр пысăкăшĕ, вăл çаврăнни çинчен, Хĕвел çинчи явленисемпе Çĕр çинчи явленисем хушшинчи çыхăнусем çинчен тĕрĕсрех пĕлме май параççĕ. Кунсăр пуçне, эпир Çĕрĕн шалти тытăмĕ çинчен те нумай пĕлĕпĕр. Çак ĕçсене хăвăртрах тăвас тесен, сăнаса пĕлнĕ даннăйсене пĕтĕм тĕнчипех пĕлтерсе тăмалла, даннăйсене йĕркене кӳме машинăсемпе усă курмалла.

Тĕнчери геофизика çулталăкĕн пахалăхне тĕллевĕсене пĕлекен мĕнпур совет çыннисем çак ответлă ĕçре ученăйсене пулăшса пырĕç.

Тĕнчери геофизика çулталăкне ирттерни тĕрлĕ çĕршывсенчи ученăйсем наукăри пĕрлехи задачăсене татса парас тĕлĕшпе тунă ĕçсенчен чи пысăк ĕç пулса тăрать. Тĕрлĕ государствăсемпе халăхсем мирлĕ пурăннă условисенче кăна çак калама çук пысăк сăнавсем лайăх результатсем пама пултараççĕ. Совет çĕршывĕ, халăхсен мирлĕ пурнăçĕн идейисене пур майсемпе те пропагандăласа, пурнăçа кĕртсе пыракан çĕршыв, Тĕнчери геофизика çулталăкне ирттернĕ чухне те пĕтĕм этемлĕх интересĕсене палăртса тăрĕ.

А. Г. КАЛАШНИКОВ.
Профессор, физика-математика наукисен докторĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—3-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—13-37, литературăпа искусство пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00897

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР,

Заказ № 2419, Тираж 29,600 экз,